Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 15 ЫТЛАРИКУН 60 (4873)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Фашисла шпионсене вилĕм!

Ĕнерхи кун совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕнче государствă йачĕпе айăплаканĕ—ССР Союзĕн Прокурорĕ А. Й. Вышинский йулташ хăйĕн вирлĕ сăмахĕнче Троцкин, Бухаринăн, Рыковăн, Крестинскин, Йагодан тата ытти шпионсемпе тăван çĕршыва сутакансен бандитла шайкин киревсĕр, изменникла, усал преступленисене суд следствинче йĕпчесе тухнине итог турĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок" тенĕскер преступлени тăвакан заговорла организаци пулнă, вăл Совет Союзĕнче капиталисăма кайала таврăсшăн пулса пирĕн тăван çĕршыва йутçĕршыв государствисене сутнă, Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçарма тăрăшнă, çав вăрçăра ССР Союзне çĕнтермеле тума хатĕрленнĕ, çак каланисене ĕнтĕ тăтăклăн тупса палăртнă.

Çакна пит уççăн тупса палăртнă: хăйсен ылханлă тĕллевĕсене ĕçе кĕртес шутпа, Бухарин, Рыков тата сылтăмла-троцкисла бандăна хутшăннисем ыттисем те шпионаж организациленĕ, совет оборонинчи çар ĕçĕн вăрттăн сведенисене тăшмансене панă. Йутçĕршыв разведкисем панă заданисем тăрăх диверçилĕ ĕçсем тунă.

Государствă йачĕпе айăплаканĕ хăйĕн сăмахĕнче „сылтăмла-троцкисла блок" организаторĕсем çинчен „идеологсен" маскине сӳсе илчĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр суйакан, икĕпитлĕ, ултавçă „тилĕпе сысна хутăш" Бухарина тăрă шыв çине кăларчĕ,—Бухарин суд следствинче те хăйне фашисла бандăн" теоретикĕ" вырăнне хурса провокаторла вăйăна малала тăсса пыма хăтланчĕ.

Государствă йачĕпе айăплаканĕ—Вышинский йулташ шпионсен, сăтăрçăсен, диверсантсен, çынвĕлеренсен вăра-хурахлă банди пур çĕрте нимĕнле теори çинчен те политикалă нимĕнле парти çинчен те сăмах пулма пултарайманнине пит те уççăн тата туллин кăтартса пачĕ.

Государствă йачĕпе айăплаканĕ хăйĕн сăмахĕнче çав бандитсен организацине хутшăннисем тунă преступленисене пĕрин хыççăн теприне пурне те кăтартса пачĕ. Государствă йачĕпе айăплаканĕ, Троцкипе Бухарин 1918 çулта мĕнле пулнине кăтартса пачĕ, вĕсем „сулахай" тата сылтăм есерсемпе пĕрле тĕнчери буржуазине савăнăç кӳме, Германи çарĕсене Совет республикине кĕме алăк уçса парас, çамрăк совет республикине, рабочисемпе хресченсене йун айне тăвас тесе, Ленина, Сталина, Свердлова арĕслеме тата вĕлерме хатĕрленнĕ. А троцкисла-бухаринла бандăн пĕтĕм ĕçĕ чи вараланчăк, чи усал та тискер преступлени пулни пирĕн умма йар уççăн тухса тăчĕ.

Кунта тӳрех шпионаж тунисĕр пуçне, совет оборонин вăрттăн сведенисене тăшмана тӳрех сутнисĕр пуçне—оборонăна вайсăрлатма сăтăрла ĕç туни те пулнă. Польшă шпионĕ, буржуалă националис, национал-фашист Гринько Рыковпа Бухарин заданийĕсем тăрăх „Совет правителствине совет тенкипе" çапма тăрăшнă, совет халăхĕн финанс хуçалăхне хавшатнă, перекет кассисен ĕçĕсене арпаштарнă, шпионсем вальли халăх укçине вăрланă.

Германи шпионĕ Чернов фашисла разведкăн заданийĕ тăрăх йалхуçалăхĕнче сăтăр тунă, Хĕрлĕ Çара вайсăрлатма лашасене вĕлерсе пĕтерне, колхозсемпе совхозсен выльăхĕсене чирсем йертсе вĕлерне.

Шпион Розенгольц тулти сутуилӳ ĕçĕнче сăтăрланă, сăтăрла договорсем тунă, совет укçине троцкисла шпионсене валеçсе панă.

Буржуалă националиссем Икрамовпа Ходжайев çĕр мамăкĕ акса тăвас ĕçре сăтăрланă, Узбекистана Англи империалисăмĕн пусмарне парас шутпа унта социалисăм строителствине аркатса пынă.

Патша охранникĕ, шпион, мерзавец Зеленский йутçĕршыв разведкисем хушни тăрăх диверçилĕ ĕçсем тунă, çу ăшне кантăк, пăта пăрахнă, вуншар пин вакун çăмарта пăснă, хуласене хăшпĕр çимĕçсемсĕр тăратса хăварнă—вăл çавсене пурне те халăха совет влаçĕ çине тарăхтарас, хăйĕн преступленийĕсен результачĕсене Совет влаçĕн органĕсем çине йăвантарас, тесе тунă.

Изменниксемпе предателсем хăйсен тискер планне ĕçе кĕртес тĕлĕшпе совет çĕршывне тата совет халăхĕсене йутçĕршыв государствисене пама пайласа тухнă, çакăншăн вĕсем йутçĕршыв государствисенчен пулăшу илнĕ. Вĕсем Украинăна, Приморйене, Белоруççине, Грузине, Арменине, Вăтам Азири республикăсене, Азербайджана сутнă. Вĕсем халăхсем чăннипех ирĕклĕн ыра курса пурăнакан, чăн-чăн нациллĕ культурăн пуйанлăхĕсемпе уçă куракан Совет республикисене капиталисăмла государствăсен колонийĕсем туса хурасшăн пулнă.

Троцкиссемпе бухаринцăсем совет правителствине хирĕç кулаксен восстанийе çĕклеме хăтланнă. „Теоретик" Бухарин çак ĕçе тума Слепкова Çурçĕр Кавказа, Йаковенкона Çĕпĕре йанă, Рыков провокатор Зубарева Урала йанă, патша правителствин ватă охранникĕ, вăлах Англи шпионĕ Иванов Çурçĕр крайĕнче восстани тăвакан бандăсем организациленĕ.

Халăхран пачах уйăрăлса тăнă, пит те вайсăр изменниксен тĕп хĕçпăшалĕ—партипе правителствă руководителĕсене хирĕç, çĕршывăн лайăх çыннисене хирĕç террор тăвасси пулнă. Кунта та, çак усал та тискер ĕçре те „сылтăмла-троцкисла блок" ку тарăнчен паллă пулнă етемсĕрлĕх, тискер те харушă преступлени виçинчен иртсе кайнă.

„Сылтăмла-троцкисла блок" çын пит-куçлĕ тĕлентермĕше, çын вĕлерене—тискер Йагодана ӳстернĕ. Бухаринпа Рыков йертсе пынипе, Троцкий хушнине пурнăçа кĕртсе, палач Йагода тискер вĕлерӳçĕсен—врачсен аллипе В. Р. Менжинскине вĕлернĕ, В. В. Куйбышева вĕлернĕ, А. М. Горькине вĕлернĕ, М. А. Пешкова вĕлернĕ. Бухаринпа Рыков йертсе пынипе, Троцкий хушнине пурнăçа кĕртсе Йагода С. М. Кирова вĕлерес ĕçе хутшăннă.

Хăйсене тăрă шыв çине кăларассинчен хăраса, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан совет разведки умĕнче чĕтресе тăрса тискер Йагода сталинла наркомăн—Н. И. Йежовăн пурнăçĕ çине тапăнассине организациленĕ.

Çак тискер те харушă преступленисене пурне те тупса палăртнă. Мухтавлă Совет разведки фашисла шпионсене преступлени тунă çĕрте тытса аркатса тăкрĕ, вĕсен йăвине çĕмĕрсе тăкрĕ.

Халăх тарăхăвĕ кĕрлет. Пĕтĕм çĕршыв çынвĕлеренсемпе изменниксене чи хаяр, та çирĕп, приговор йышăнма вайлăн ыйтни тавра пĕрлешсе тăрать. Çын сăн-питне çухатнă фашиссене совет çĕрĕ çинче вырăн çук, пулма та пултараймасть.

Вышинский йулташ айăпласа каланă сăмахне йар уçă тата хĕлхемлĕ сăмахсемпе вĕçлерĕ. Суд çине çавăрăнса пăхса, вăл çапла каларĕ:

„Пирĕн халăх тата пĕтĕм тĕнчери тӳрĕ çынсем сирĕн тивĕçлĕ приговора кĕтеççĕ. Сирĕн приговор хамăрăн аслă çĕршыв тăрăх çĕнĕ паттăр ĕçсем тума, çĕнĕ çĕнтерӳсем тума чĕнекен чан сасси пек илтĕнтĕр. Сирĕн приговор советла тивĕçлĕ наказанин сывлăша уçăлтаракан, пĕтĕм ыр-мара тасатакан аçа-çиçĕм пек йанратăр!

Пирĕн пĕтĕм çĕршыв, пĕчĕккисенчен пуçласа ваттисем таранах,—пурте çакна кĕтеççĕ: тата ыйтаççĕ: хамăрăн тăван çĕршыва сутнă изменниксемпе шпионсене усал йытăсем вырăнне хурса персе вĕлермеле!

Пирĕн халăх çакна ыйтать: ылханлă çĕлен-калтасене таптаса лапчăтăр!

Ку вăл халăх сасси, хăватлă совет çĕршывĕн сасси!

(„Правда" умстатйи).

ТИВĔÇЛĔ НАКАЗАНИ

(Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан ертелри рабочисемпе служăщчисен митингĕ йышăннă резолюцирен)

Тăван çĕршыва сутакансем, фашиссен ирсĕр тарçисем—Бухарин, Рыков, Крестинский, Йагода, Иванов тата ытти бандитсем ССР Союзĕнчи социалисăмла стройа сирпĕтсе пăрахса тепĕр хут буржуази влаçĕ туса хума хатĕрленнĕ.

Халăх тăшманĕсен нимĕнле ирсĕр, тискер ĕçĕсем те пирĕн ретсене пăсаймĕç. Совет халăхĕ хăйĕн правителствипе коммунисла парти тавра, хамăрăн йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра тата ытларах таччăн пĕтĕçет.

Епĕр, Ленин йачĕпе тăракан ертелри рабочисемпе работницăсем ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ тăван çĕршыв тăшманĕсене персе пăрахма йышăннă приговора пĕтĕм кăмăлран ырлатпăр.

Совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене, пролетарилĕ революцин шиксĕр бойецĕсене—Кирова, Куйбышева, Менжинскине, пирĕн йуратнă аслă пролетарилĕ писателе М. Горькине вĕлерекен тискер тăшмансене ĕмĕр-ĕмĕрех ылханатпăр.

Троцкисла-бухаринла ирсĕр йытăсем йăнăшрĕç, вĕсене аслă совет халăхĕ кирлĕ пек наказани пачĕ.

Пирĕн çĕршыв хăватлă, ун çине нимле тăшман та ура пусаймĕ.

Епĕр, рабочисемпе работницăсем, пурте пĕр çын пек пулса хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама хатĕр тăратпăр, революцилĕ сыхăлăха, политикăла пĕлӳве ӳстеретпĕр. Стахановцăсен, ударниксен шутне нумайлататпăр.

Приговора ырлатпăр

Мартăн 13-мĕшĕнче Шупашкарти педрабфакпа пединститутри преподавателсемпе студентсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра 1000 çынна йахăн пулчĕç.

Митингра ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ „сылтăмла-троцкисла блокăн" йунлă заговорщикĕсене—Бухарин, Рыков, Йагода т. ыт. тăшмансене, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă йытăсене персе пăрахма йышăннă приговора пĕтĕм кăмăлтан ырларĕç.

Ылханлă тăшмансем тăван çĕршыва фашиссене сутасшăн пулнă, вĕсем совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене—Кирова, Куйбышева, Менжинскине, Горькине тата унăн ывăлне вĕлернĕ. Митингра тухса калакансем: „Верховнăй Судăн Çар Коллегийĕ йышăннă приговор—пĕтĕм совет халăхĕн приговорĕ"—терĕç.

Ан. Иванов.

Çулпуççăн пурнăçне куç шăрçине сыхланă пек сыхлар!

(Шупашкарти Водопйанов йачĕпе тăракан тир-сăран заводĕнчи рабочисемпе служăщчисен митингĕ йышăннă резолюцирен)

ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ фашисла бандитсене: Бухарина, Рыкова, Йагодана, Крестинскине т. ыт. те персе пăрахма йышăннă приговора чунтан хавасланса итлерĕмĕр.

Суд приговорĕ—пĕтĕм халăхăн приговорĕ. Вăл тĕрĕс приговор. Пирĕн партин, халăхăн чи лайăх ывăлĕсене — Кирова, Горькине, Менжинскине, Куйбышева вĕлернĕ фашисла бандăшăн Совет çĕршывĕнче вырăн çук, пулма та пултараймасть. Тăшмана сутăннă фашисла шпионсем, патша охранкинчи провокаторсем, çынвĕлерен врачсем—пурте вĕсем социалисăм обществине тăвакан совет халăхне хирĕç хайаррăн кĕрешме пĕрлешрĕç.

Чаплă наркомвнуделцăсем тата Сталинла нарком Николай Иванович Йежов çак тискер çĕлен-калтасене тытса лапчăтса хучĕç.

Совет халăхĕ тата унăн çивчĕ куçлă часовойĕсем, наркомвнуделцăсем фашисла шпионсен, провокаторсен, çынвĕлеренсен мĕн пур планĕсене çапса çĕмĕреççĕ, бандитсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтереççĕ. Çакна вĕсем пĕлсе тăччĕр!

Коммунисăм тăвас ĕçе чарса лартма епĕр никама та ирĕк памастпăр!

Пирĕн хаклă, йуратнă çулпуççĕн, Сталин йулташăн пурнăçне куç шăрçине сыхланă пек сыхлар!

Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ!

Сывă пултăр аслă çулпуçĕ, учител Сталин йулташ!

К. Маркс Российă çинчен

(Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи) кризис*)—вăл Йевропă историйĕнче çĕнĕ çаврăну тĕлĕ. Российă — унăн лару-тăруне епĕ вырăссем хăйсем, хăйсен чĕлхипе çырнă официаллă мар тата официаллă документсем тăрăх (официаллисене нумай мар çынсем çеç тупса вĕсемпе паллашма пултараççĕ; вĕсене мана Петербургри манăн туссем тупса пачĕçĕ) тĕпчесе сăнарăм та—Российă тахçантанпах ĕнтĕ переворот умĕнхи кунсене пурăнса иртерет; переворот валли пур кирлĕ елементсем те хатĕр. Туркăсем маттур, вĕсем вырăс çарĕсене (тата вырăс финансĕсене) кăна мар, çара командоват туса тăнă патша ăраттине те (патшана, наследнике тата Романовсен ытти ултташне) вирлĕн тивертнĕ çапкăпа переворот пулассине нумай çуллăха хăвăртлатрĕç. Переворот, кирек хăçанхи пекех, конституцилĕ вылянипе пуçланса кайĕ, унта вара лайăх та тӳнкелешӳ ахăрса кайĕ. Ехер çутçанталăк-анне пиртен сивĕнсе пире хирĕç çаврăнса тăмасан, епĕр çав уйавчен пурăнса çитĕпĕр-ха. Вырăс студенчĕсем тăвакан айванка ĕçсем систерӳ кăна пулса тăраççĕ те хăйсене хăйсем усăсăр вĕсем. Анчах çапах та—систерӳ вĕсем. Вырăс обществин пур сийĕсем те халăхи вăхăтра економикăлă, морал тата ăс-пуç тĕлĕшĕнчен пĕтĕмĕшпех пăтрашăнса арканса çыраççĕ.

Революци ку хутĕнче Хĕвелтухăçĕнче, ку таранччен контрреволюцийĕн çирĕп крепăçĕ тата резервăлă çарĕ пулнă çĕрте пуçланать**).

Господин Бисмарк йунлă çапăçува пысăк хаваспах искерсе тăчĕ, анчах ĕçе пит те шала йарасшăн пулмарĕ. Пит те вăйсăрланса çитнĕ Российă, Франципе Пруççи хушшинче пулнă вăрçă чухнехи пек, Австрийе хăратса тăма***) пултарайман пулнă пулĕччĕ. Ĕç унта та революци патне çитсе тăрсан, унчухне Гогенцоллерксен династийĕн йулашки тĕрекĕпе мĕн пулса тăрĕ-ха вара?

Ку вăхăтра ĕç пĕтĕмпех çакăнтан килет: полаксем (полаксен патшалăхĕнче) хăйсене лăпкăн тыткалĕç-ши. Унта анчах ку вăхăтра нимĕнлĕ пăлхавсем ан пултăрччĕ. Бисмарк çийĕнчех унта хăйĕн çар полкисене йама пултарать, унчухне вара вырăс шовинисăмĕ каллех патша йенне сиксе куçĕ. Полаксем ĕнтĕ Петербургра, Мускавра пушар тивсе вăйланса кайиччен лăпкăн ларса вăхăта кĕтсе илсен, тата Бисмарк çăлакан вăй вырăнче тухсан, Пруççи... хăйĕн Мексикине****) тупать вара...

(К. Маркс и Ф. Энгельс, Собр. соч. т. XXVI. стр. 480—481).

Российăри революцийĕн конкретлă лару-тăруне Маркс тахçан малтанах мĕн тери тĕрĕс пĕлсе тăни, Франципе Пруççи хушшинче вăрçă пуçланнă хыççăнах ку тĕлĕшпе Маркс мĕн çырнинчен те курăнать.

1870 çулхи августăн 8-мĕшĕнче Маркс Енгелс патне ак мĕн çырнă:

Российă, лăп Бонапарт 1866 çултан пуçласа 1870 çулччен хăтланнă пекех, Пруççипе,—Турцийе уступкăсем тутартарас тесе, — чейеленсе мошениклĕ ĕçсем тума пуçлĕ, анчах çав пĕтĕм чейеленсе мошеникленни, Гогенцоллернсен тĕнĕ вырăс тĕнĕ пулнине пăхмасăрах çав мошенниксем хушшинче вăрçă пуçланса кайнипе пĕтĕ". тенĕ.

(К. Маркс и Ф. Энгельс, Письма. соцэкгиз, 1932 г. ст. 280).

Çав (1870) çултах çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче Фридрих — Альберт Зорге патне Маркс çапла çырнă:

„Халхи вăрçă Российăпа Германи хушшинче, 1866 çулхи вăрçă Пруççипе Франци хушшинче пур-пĕр вăрçă пуçласа йанă пекех, пур-пĕр вăрçă пуçланса кайасси патне,—çакна ĕнтĕ Пруççи тăмпайĕсем***) ăнланаймаççĕ,—илсе пырать. Ку ĕнтĕ Германи валли вăрçăран еп кĕтекен результатсенчен чи лайăххи пулса тăрать. Чăн-чăн „пруссачество" Российăпа сойузра тăнисĕр пуçне урăхла, тата Российăна пăхăнса тăнисĕр пуçне урăхла нихăçан та пурăнман, пурăнма та пултараймасть. Кусемсĕр пуçне, çавăн пек 2-ш номĕр вăрçă Российăри пур-пĕр пулас социаллă революцийĕ çуралма пулăшакан вăй пулса тăрĕ", тенĕ.**

(К. Маркс и Ф. Энгельс. Собр. соч. т. XXVI, стр.71).

1882 çулти йанварти вырăсла куçарса кăларакан „Коммунисла манифеса" валли йатарласа çырнă умсăмахра Маркспа Енгелс—„Российă—Йевропăри революцилĕ йухăмăн малти отрйачĕ", тесçĕ.

1863 çулти февралĕн 13-мĕшĕнче Маркс Енгелс патне Польшăри восстани çинчен çырнă çыруĕнче:

...Çакă паллă—Йевропăра халĕ революцисен самани татах пуçланчĕ... Ку хутĕнче революцийĕн вутлă хумĕ Хĕвеланăçнеле Хĕвелтухăçĕнчен, урăхла мар, йăванса килĕ, çапла вара епĕр ку хутĕнче французсен пуçару чысĕнчен ирĕклĕ пуласси çине шанма пулать", тесе çырнă.

*) Кунта сăмах Российăпа Турци хушшинче 1877—1878 çулсенче пулнă вăрçă çинчен пырать.

**) Курсив пирĕн.

***) Франципе Пруççи хушшинче пулнă вăрçă чухне Российă Пруççи тĕлĕшпе туслă нейтралитетра хăй пĕр пĕччен кăна мар тăнă тата Австрипе Италийĕ те туслă нейтралитетра тăма ирĕксĕрлетнĕ.

****) Наполеон III хăйĕн кисренсе тăракан империне 1861 — 1863 çулсенче Мексикăна хирĕç колонилĕ вăрçă пуçласа йанине тĕреклетес вырăнне, йалтах урăхла — Франципе Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳлĕ штатсем тата Англи хушшинчи çыхăнусене пăсса сӳрĕлтернипе çĕршыври республикăлă оппозицийе вăйлалатса йанине аса илтерсе каланă.

*****) Кунта Маркс—Пруççи ашакĕсем, тет.

Суд приговорĕ—халăх приговорĕ

„Сылтăмла-троцкисла блокра" пулнă ирсĕр шпионсем, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă предателсем тивĕçлипе хайаррăн айăпланчĕç.

—Совет сучĕ „сылтăмла-троцкисла блокра" пулнă, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă ирсĕрсем—çынвĕлеренсем, шпионсем, сăтăрçăсем тата диверсантсем пирки йышăннă тĕрĕс приговора епĕр хĕрӳлĕн саламлатпăр. ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги приговорĕ—вăл пĕтĕм аслă совет халăхĕн приговорĕ.

Вуншар çулсем хушши партине, правителствăна тата совет халăхне хирĕç ишĕлтерӳлĕ сăтăрла ĕç туса пынă сылтăммисене, троцкиссене, меншевиксене, есерсене, буржуалă националиссене, вĕсем фашисла бандăсем пулса тăнине совет сучĕ тăрă шыв çине кăларчĕ, вĕсен маскине çурса пăрахрĕ.

(Мускаври Киров йачĕпе тăракан „Динамо" заводĕнчи рабочисемпе специалиссен митингĕ йышăннă резолюцирен).

* * *

— Суд приговорĕ—пĕтĕм совет халăхĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕççынnисен приговорĕ, вăл—прогресс, культурă тата лăпкă самана интересĕсемшĕн тăракан пĕтĕм çынсен приговорĕ. Социалисăм çĕршывĕнчи вырăс, украинă, белорусс, узбек тата ытти халăхĕсен аслă туслăхĕн хăватне, пирĕн вăйа никам та кисретме пултарас çук.

(Кийеври „Ленинская Кузница" заводри рабочисен митингĕ йышăннă резолюцирен).

* * *

Троцкий—Бухарин йунлă бандин тĕлĕнмеле тискер те ирсĕр планĕсене Совет сучĕ вĕçне çитийех сӳтсе пăрахрĕ. Социалисăм çĕршывĕн аслă халăхĕ, Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтерейми йалавĕ тавра пĕр чăмăра пĕрлешсе пĕтĕçнĕ халăх, хăйĕн тăван çĕршывне сутакансене нихăçан та шеллемен тата малашне те шеллес çук. Çакна асра тытчăр фашиссем: вĕсем хăйсен планĕсене пурнăçа кĕртесси нихăçан та пулас çук. Епĕр малăла—коммунисăм патнеле çĕнтерӳлĕн пырассине чăрмантарма пултаракан вăй çук.

(Свердловскри Уралмашзаводри рабочисемпе специалиссен 8 пин çынлă митингĕ йышăннă резолюцирен).

* * *

— ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ пирĕн ирĕкпе кăмăла, хăватлă совет çĕршывĕнчи ĕççыннисен ирĕкĕпе кăмăлне пурнăçа кĕртрĕ. Пур тăшмансем те çакна асра тытчăр: пирĕн çĕнтерӳлĕ строителства сăтăр тума хăйакансене, хăйсен варланчăк аллисене Советсен ирĕклĕ çĕрĕ çине çĕклекенсене,—вĕсене пурне те „сылтăмла-троцкисла блокри" ирсĕр йытăсен шăпийех кĕтет.

(Харьковри Сталин йачĕпе тăракан заводри рабочисемпе служăщчисен 10 пин çынла митингĕ йышăннă резолюцирен).

* * *

— Епĕр, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хамăрăн мухтавлă совет разведкине йаланах пулăшнă тата малашне те пулăшса тăрăпăр. Совет халăхĕн ылханлă тăшманĕсене—сылтăмла-троцкисла шпионсемпе диверсантсене аркатăр, пĕр шеллемесĕр пĕтерĕр! Халăх тăшманĕсене нимĕнле хĕрхенӳ те çук! Тăван çĕршыва сутакансене вилĕм!

(Горькийри „Красное Сормово" заводри рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен 10 пин çынлă митингĕ Н. И. Йежов йулташа саламласа йанă телеграммăран).

* * *

— Епĕр, „Красный рыбак" ертелри колхозник-казаксем, ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ тăван çĕршыва сутакансен, çынвĕлеренсен банди пирки йышăнна приговор çинчен пысăк савăнăçпа пĕлтĕмĕр. Фашисăма тара кĕрешнĕ тарçăсем, пирĕн ирĕклĕ, хăватлă халăха капиталисăм пусмăрĕ айне кĕртсе ӳкерес тесе, тĕлĕнмеле ирсĕр ĕçсем тунă. Пулмарĕ вăл, нихăçан та пулас çук! Епĕр фашиссемпе вĕсен тарçисене хамăрăн ирĕклĕ çĕр çинче хуçа пулма нихăçан та ирĕк парас çук.

(Ростов облаçĕ, Вешенскайа станици).

* * *

— ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ тăван çĕршыва сутакансен ирсĕр банди пирки йышăннă тĕрĕс приговора ырлатпăр. Октаберте кĕрешсе илнĕ аслă та таса çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсем çине алă çĕклеме хăтланакан пĕтĕм халăх тăшманĕсене совет разведкипе совет правосудийĕ малашне те пĕр шеллемесĕр аркатса пырасса епĕр шансах тăратпăр.

(Диксон утравĕ çинче хĕлкаçакансем йышăннă резолюцирен).

Германи фашисĕсем Австрире хуçаланаççĕ

Йулашки пĕлтерӳсем тăрăх, Австрири пĕтĕм влаç Германи фашисĕсен аллинче. Пĕтĕм государствă учрежденийĕсене фашиссен охранăлă отрйачĕсемпе штурмовикĕсем йышăннă. Мартăн 12-мĕшĕнче Германи çарĕсем Австри столицине—Венăна йышăннă. Венăри аеродрома Германи самолйочĕсем 100 ытла анса ларнă. Австрин ытти аеродромĕсенче татах çавăн чухлĕ вăрçă самолйочĕсем. Германин темиçе пин лйотчикĕ пур.

Австрири Линц йатлă хулана Гитлер пынă. Ăна Австрири çĕнĕ „правителствăн" пуçлăхĕ Зейсс-Инкварт кĕтсе илнĕ. Инкварт çапла каланă: „Австри Гитлера хăйĕн çулпуçĕ тесе йышăнать тата Сен-Жерменри килĕшӳ договорĕн 88-мĕш параграфĕ пăрахăça тухнă тесе пĕлтерет". (Вăл параграф Австрине Германи çумне пĕрлешме чаракан параграф пулнă).

Австри Германи çумне пĕрлешни çинчен официаллă пĕлтернĕ

Мартăн 13-мĕшĕнче каçхине Австри „правителствин" пичет шефĕ йутçĕршыв корреспонденчĕсене çапла пĕлтернĕ:

„Президент Миклас отставкăна тухнă. Австри конституцин 77-мĕш статйи тăрăх, вăл туса тăмали ĕçсем Бундес-канцлер (урăхла каласан Зейсс-Инкварт) çине куçаççĕ. Австри правителстви Австрине Германи çумне пĕрлештересси çинчен саккун пичетлесе каларнă. Саккунăн пĕррмĕш статйи çапла калать: „Австри Германи империн çĕршывĕ пулса тăрать",—тенĕ.

Пичет шефĕ малала çапла каланă: Саккунăн 2-мĕш статйи тăрăх, апрелĕн 10-мĕшĕнче, Австрине Германи çумне пĕрлештерес ыйту тăрăх, 20 çула çитнĕ пĕтĕм „нимĕç австрийцисемпе" пĕрле пĕтĕм халăх сасăласси пулмала, тенĕ. Пĕрлешĕнес ыйтува,—тенĕ малала пичет шефĕ,—ытларахăн сасăласа йышăннипе татса параççĕ.

(ТАСС).

Метрополитенăн Покровский радиусĕ уçăлнă

Мартăн 13-мĕшĕнче Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан метрополитенăн Покровский радиусĕ тăрăх метро пуйăсĕсем çӳреме пуçланă. Çĕнĕрен хывнă çул тăршшĕ—3,5 километр. Вăл Курский вокзала тата ун патĕнчи районă хула центрĕпе тата метрон пĕтĕм çулĕсемпе çыхăнтарса тăрать.

Покровский радиуса ĕçе йанине пула, метро кашни талăкрах халичченхинчен 50 пин çын ытларах лартса çӳретме пултарать. Халхи вăхăтра метро талăкне çур мĕлйуна йахăн çын лартса çӳретет.

(ТАСС).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Мартăн 11-мĕшĕнчи ирхи лару

Государства йенчен айăплакансен — ССР Союз Прокурорĕн А. Й. ВЫШИНСКИЙ йулташăн сăмахĕ)*

Çак процесăн уйрăмлăхĕсем

Судьйе йулташсем, ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги членĕсем!

Çак ĕç тарăх хам айăпласа калама пуçласа,— ку ĕç пит сайра пулакан йапала, вăл калама çук общественнăй политикăлла пысăк вырăн йышăнса тăрать, епĕ сире пуринчен малтан çак ĕçĕн хăшпĕр уйрăласа тăракан йенĕсем çине, унăн хăшпĕр çав тери пысăккăн палăрса тăракан уйрăмлăхĕсем çине çавăрăнса пăхтарасшăн.

Пирĕн тăван çĕршывăн ырлăхĕсене хирĕç, пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыва— пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывне хирĕç туна йавартан та йăвар преступленисен çуне пирĕн çĕршывăн Верховнăй Сучĕ пĕрремĕш хут мар пăхса тухать. Анчах çитта калакан йанăш тумасăн пулать те, епĕ пирĕн судăн çакăн пек ĕçе, çак судра сирĕн ăнç умĕн иртнĕ, пĕтĕм тĕнче куçĕ умĕн иртнĕ çакăн пек преступленисемпе çакăн пек тискер те хăрушă ĕçсене, хальхи вăхăтра сирĕн умра айăпланакансен тенкелĕ çинче ларакансем пек преступниксем çинчен пĕрремĕш хут пăхса тухма тивет.

Чăнах та, клас кĕрешĕвĕн тата пирĕн тăшмансем йенчен социалисăм ĕçне хайарран хирĕç тăнă условисене пула, йулашки вăхăтра сахал мар пулса иртнĕ суд процесĕсенчен çак господасем тунă преступленисен хăрушлăхĕ, ирсĕрлĕхĕ тата намаслăхĕ йенчен илсен хăшĕ хальхи процесра тăнлашма пултартăр!

Çав преступленисен чăн-чăн ăшчикĕсене çакăн пек вăйлăн та тарăнăн уçса паларт(ма), пÿтсĕрсен пичĕ çинчен вĕсен ирсĕр чейе маскисене çакăн пек вăйлăн сирсе пăрахса пĕтĕм тĕнчери вăрăхурахсен,— тискер сăнне, рабочисемпе хресченсен çĕнĕ, телейлĕ те хаваслӑн чечекленекен социалисăмла общеcтвине туса хунă пирĕн мирлĕ социалисăмла ĕçе хирĕç пÿтсĕрсен аллине пĕлсе пăракан вăрăхурахсен тискер сăнне, пĕтĕм пирĕн халăха тата мĕн пур тĕнчери пĕтĕм тÿрĕ кăмăллă çынсене кăтартса пама урăх хăш процесра май килнĕ!

Çак пĕр обстоятелства кăна ку процес çав тери пысăк общеcтвăлă-политикăла вырăн йышăнса тăни çинчен, çак процес калама çук пысăккăн палăрса тăракан ĕç пулни çинчен, çак процес **историлĕ вырăн йышăнса тăни** çинчен çителĕклĕ уççăн каласа парать.

Мĕнре пулать çак процес историлĕ вырăн йышăнса тăни? Мĕнре пулаççĕ унăн хăшпĕр уйрăмлăхĕсем?

Çак процес историлĕ вырăн йышăнса тăни чи малтан çакăнта пулать: **сылтăммисем, троцкиссем, меньшевиксем, ес-ерсем, буржуалă националиссем** тата ыттисем те тата çавнашкаллисем те **сынвĕлеренсен, шпионсен, диверсантсемпе сăтăрçăсен принципсăр идейăсăр банди** пулса тăраççĕ, урăх нимĕн те мар, ăна çак процесра çав тери йĕркелĕн те тĕрĕс кăтартса, ĕнентерсе панă, палăртса çирĕплетнĕ.

Шăп пĕр çул кайала Сталин йулташ, пирĕн ĕçри çитменлĕхсене анализ туса, троцкисла тата ытти икĕпитлисене пĕтерес ĕçсем çинчен кăтартса пырса, çапла каланă:

> „Пĕр-икĕ сăмах сăтăрçăсем, диверсантсем, шпионсем тата ыттисем çинчен. Хальхи сăтăрçăсемпе диверсантсем, вĕсем кирек мĕнле флагпа—троцкисла йе бухаринла флагпа витĕнсе пытанаççĕ пулсан та, рабочи йухăмĕнче тахçанах политикăлă йухăм пулма пăрахни, вĕсем „профессионалла сăтăрçăсен, диверсантсен, шпионсен, сынвĕлеренсен принципсăр тата идейăсăр банди пулса кайни халь ĕнтĕ пуриншĕн те уççăнах паллă, тесе шутлатăп епĕ. Паллах, çав господасене—рабочи клас тăшманĕсене, пирĕн тăван çĕршыва сутакансене пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе тăкма тата кăкласа пăрахма тивет. Ку уççăнах паллă, ăна тата та ăнлантарса пама кирлĕ мар“.

Çулталăк иртрĕ. Çак процес тĕслĕхĕнчен епĕр Сталин йулташ троцкиссемпе бухаринцăсене хак панă чухне çав тери тĕрĕс пулнине куратпăр.

Троцкиссемпе бухаринцăсем, урăхла каласан, „сылтăмла-троцкисла блок“,—унăн пуçлăхĕсем халь кунта судпа айăпланакансен тенкелĕ çинче ларасçĕ, вăл политикăлă парти мар, политикăлă йухăм мар, вăл уголовлă преступниксен банди, тата ахаль уголовлă преступниксен çеç те мар, тăшманла разведкăсене сутăннă преступниксен банди, вăл преступниксене уголовниксем хăйсем те чи ирсĕр, чи пÿтсĕр ылханлă, çĕрĕксенчен те чи çĕрĕк преступниксем тесе хаклаççĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок“ текен блок вăл шпионажăн, диверсийен, сăтăрлăхăн, политикăлă вĕлерÿсен тата хăйсен тăван çĕршывне тăшмансене сутса пĕтерекенсен организацийĕ.

Блокăн нимĕнле идейăлăх та, каласа пулать, нимĕнле „духовлăх“ та, нимĕнле идеологилĕх те çук. Çак блокра тăракансенчен хăшĕн-пĕрин тахçан-малтан мĕн чухлĕ те пулин пулни вăл тахçанах çухалнă, сăланнă, тахçанах пĕтнĕ, вилĕ шăрши çапнă йĕрĕнчĕклĕ шпионла ирттанлахра çĕрсе кайнă.

Чăн та, айăпланакансенчен хăшпĕрисем, уйрăмах айăпланакан Бухарин çак процесра, „француссем калана пек, йăпăх вырăнта чухне лайăх мина сыхласа хăвармалла, „идейăлă“ çынсем пек пулса курăнма хăйсен бандитла уголовлă ĕçне тĕрлĕрен „философилĕ“, „идеологилĕ“ т. ыт. калаçусемпе витме пĕр хут мар хăтланчĕç.

Бухарин кунта хăйĕн ирсĕр преступленийĕсен мĕн пур тискер хăрушăлăхне темĕнле „идейăлă установкăсем“ çеç тесе калама хăтланчĕ, вĕсем çинчен вăл вăрăм та хитре сăмахсем калама пăхрĕ. Бухарин кунта çав шпионла-сăтăрла организацире ĕçе пайласа тухни çинчен, темĕнле „программăлă пунктсем“ çинчен, темĕнле „идейăла ориентаци“ çинчен каларĕ, анчах —хушса хучĕ вăл — кулаксем çине идейăла ориентаци тытни,— терĕ.

Аллинчен йарса илнĕ, преступлени тунă çĕртех тытнă Бухарин, йĕрсене йепле те пулин шăлса лартас тесе, Гегеле хăйне свидетел пулма чĕнет, лингвистикăпа, филологи тата риторикă чăтлăхĕсене кĕрсе кайат, темĕнле учонăй сăмахсемпе пакăлтатать. Анчах вăл тÿсеймест, хăйĕн учонăйла-аташула пакăлтатăвне çапла йышăннипе пĕтерет:

> „Епĕр пурсăмăр та чи тискер контрреволюционерсем, социалисăмлă тăван çĕршыва сутакансем пулса тăтăмăр, епĕр шпионсем, террориссем, капиталисăм реставраторĕсем пулса тăтăмăр. Епĕр сутăнчăклă ĕç, преступлени турăмăр, тăван çĕршыва пăрахса тăшман йенне куçрăмăр. Епĕр повстанчествăлă отрйачĕ пулса тăтăмăр, террорла ушкăнсем организацилерĕмĕр, сăтăр турăмăр, пролетариатăн Совет влаçне сирпĕтсе йарассишĕн пултăмăр“.

Бухаринăн кун çумне çапла хушмала пулнă: „Епĕр йапон-германь разведкин полици пайĕ пулса тăтăмăр, епĕр тăван çĕршывпа намăса пĕлмесĕр суту-илÿ тăвакансем пулса тăтăмăр“.

Блок — вăл йутçĕршыв разведкисен агентури. Блок членĕсем тата унăн кунта айăпланакансен тенкелĕ çинче ларман Троцкий йышши, Бухарин, Рыков, Йагода, Крестинский, Розенгольц йышши руководителсем тата Зубарев, Максимов-Диковский тата ыттисем пек рйадовой членĕсем—вĕсем çав разведкăсен чурисем, вĕсем хăйсен хуçисен тарçисем.

Философи тата шпионаж, философи тата сăтăрлани, философи тата диверçисем, философи тата вĕлерÿсем — генийпе тискерлĕх пек—икĕ йапала пĕрле пулаймаççĕ!

Епĕ урăх тĕслĕхсем пĕлместĕп,—ку вăл шпион тата сынвĕлерен хăйĕн айне пулмали сынăн пуçне вăрăхурахла кистенпе çапса аркатас умĕн унăн куçне тÿсе вĕтетнĕ кантăкпа сапнă пек, философине ĕçе йанине кăтартакан историлĕ пĕрремĕш тĕслĕх пулса тăрать!

„Сылтăмла-троцкисла блок“—йутçĕршыв разведкисен агентури

„Сылтăмла-троцкисла блок“, хальхи вăхăтра судпа айăпланакансен тенкелĕ çинче ларакансĕр,—куна суд следстви уççăн кăтартса пачĕ, вăл—пĕтĕм тĕнчери фашисăмăн малта пыракан отрйачĕ çеç, вăл палачсен тата пытанса ĕçлекен сынвĕлеренсен йытушкăнĕ, вĕсем пулăшнипе тĕрлĕрен çĕршывсенче, чи малтанах Испанипе Китайра фашисăм аскăнать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ шпионла бандăна, „сылтăмла-троцкисла блока“ тăрă шыв çине туртса кăларни пирĕн социалисăмлă револющишĕн кăна мар, вăл тата пĕтĕм тĕнчери мĕн пур пролетариатшăн та калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл пĕтĕм тĕнчери мирлĕх ĕçĕшĕн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл пĕтĕм етемлĕх кульруришĕн, халăхсен чăн-чăн демократийĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешÿшĕн, мĕн пур тата пур йышши вăрçă чĕртсе йаракансене хирĕç, пĕтĕм тĕнчери мĕн пур провокацисемпе провокаторсене хирĕç пыракан кĕрешÿшĕн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ тĕнчери мĕн пур çĕршывсенчи ĕççынни массисем, уйрăмах халăх хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн, фашисла пусмăрлăха хирĕç паттăрăн кĕрешекен çĕршывсенчи ĕççынни массисем çак процес мĕнле пынине çÿçенсе те тимлĕн сăнаса тăраççĕ.

Бухаринсемпе Рыковсем, Йагодасемпе Булановсем, Крестинскисемпе Розенгольцсем, Икрамовсем, Шаранговичсем, Ходжайевсем тата ыттисем те—вĕсем пиллĕкĕмĕш колоннах, вĕсем ПОУМ-ах, вĕсем Ку-Клукс-Клан-ах. Вĕсем фашисла провокаторсемпе вăрçă чĕртсе йаракансен пĕтĕм тĕнчере ĕçлекен отрйачĕсенчен пĕри.

Çак отрйата çĕмĕрсе тăкни—мирлĕх ĕçĕшĕн, демократи ĕçĕшĕн, етемлĕхĕн чăн-чăн кульруришĕн пысăк усă пулать.

Çак процесăн çав тери пысăк пахалăхĕ, çапах та, кунта калани пех пĕтмест-ха.

Кунта, судпа айăпланакансен тенкелĕ çинче, пĕр кирек мĕнле совета хирĕçле ушкăн мар, кирек мĕнле пĕр йутçĕршыв разведкин агентури мар ларать. Кунта, судпа айăпланакансен тенкелĕ çинче, совета хирĕçле чылай ушкăнсем лараççĕ, вĕсем ССР Союзĕ çине тăшманла пăхакан чылай йутçĕршывсен разведкисен агентури пулса тăраççĕ.

Çак „ĕçре“ совета хирĕçле мĕн пур вăйсен, ушкăнсемпе организацисен йулашкийĕсем сыпăçанса ларнă, сахалтан та,—куна суд следстви тĕплĕн палăртса çирĕплетнĕ,—тăватă йутçĕршыв разведки: Йапони, Германи, Польшă, Англи разведкисем тата, паллах, çакăнта асăннă разведкăсемпе туслă, оперативлă текен килĕшÿ тытса пыракан ытти мĕн пур йутçĕршыв разведкисем сыпăçанса ларнă.

Чăнахах та, Троцкий çинчен калас пулсан, вăл Гестапопа сыхăннине 1936 çулхи август уйăхĕнче троцкисла-зиновйевла террорла центр процесĕнче тата 1937 çулхи йанвар уйăхĕнче совета хирĕçле троцкисла центр процесĕнче тĕпĕ-йĕрĕпех палăртса çирĕплетнĕ. Халь вăра вăл нимĕçсен политикăлă полицийĕпе тата ытти çĕршывсен разведкисемпе чылай ĕлĕкрех сыхăннине, Троцкий Германи разведкипе 1921 çултанпах сыхăнса тăнине ĕнентерсе панă. Кун çинчен çак суд процесĕнче Крестинский йăлтах тĕрĕс кăтартса пачĕ. Халь Троцкий Англин „Интеллидженс-Сервис“ разведкипе 1926 çултанпа сыхăнса тăнине ĕнентерсе панă. Кун çинчен айăпланакан Раковский тĕрĕс кăтартса пачĕ,—тата ăна ĕнентерсе панă ĕнтĕ. Троцкий пуç пулса йертсе пыракан пĕтĕм блок йăлтах йутçĕршыв шпионĕсемпе патша охранникĕсенчен çеç тăнă.

Бухаринпа Рыков хăйсемпе пĕр шухăшлисем урлă чылай йутçĕршыв разведкисемпе сыхăннă пулнă, çав разведкăсене вĕсем йаланах пулăшса тăнă.

Йагодана Германи, Йапони тата Польшă шпионĕсем шăнасем пек сырăнса илнĕ пулнă, çав шпионсене вăл витсе усранă çеç те мар, çакна вăл кунта хăй те йышăнчĕ, тата çав шпионсем урлă вăл, государствăн секретлă материалĕсене разведкăсем патне йарса тăрса, пирĕн çĕршыва çав йутçĕршыв разведкисене сутса тата парса, шпионла ĕç туса пурăннă.

Крестинский, хăй йышăннă тăрăх,—1921 çултанпа Германи шпионĕ.

Розенгольц—троцкисла вăрттăн ĕçĕн руководителĕсенчен пĕри,—кăна палăртнă,—хăйĕн шпионла ĕçне Германи генеральнăй штабĕ валли, хăй йышăннă пек, 1923 çулта пуçласа йанă, Англи разведки валли шпионла ĕç туса тăма 1926 çулта пуçланă, çак преступлени çинчен те вăл хăйех йышăнчĕ.

Раковский—Троцкин сывăхрăн та сывăх тата уйрăмах шанчăклă çыннисенчен пĕри, вăл хăй кăтартса панисем тăрăх, 1924 çултанпа Англин „Интеллидженс-Сервис“ разведкин агенчĕ тата 1934 çултанпа Йапони разведкин агенчĕ пулса пурăннă.

Чернов—Германине усă кÿрес тĕлĕшпе хăйĕн шпионла ĕçне тума, хăй кăтартса панă тăрăх, 1928 çулта пуçланă, ăна вăл чылайах паллă емигрант-меньшевик Дан пуçарувĕпе тата пулăшнипе Германи разведкипе сыхăнса тунă.

Шаранговича Польшă разведки хăй аллине йавăçтарса шпионла ĕç тума ССР Союзне 1921 çулта йанă.

Гринько, хăйĕн сăмахĕсем тăрăх, 1932 çулта Германипе Польшă разведкисен шпионĕ пулса тăнă, кунччен вăл çав разведкăсемпе, уйрăмах Польшă разведкипе, шпионла сыхăну тытнă.

Икрамовпа Ходжайев хăйсен курбашĕсем урлă Бухарин йертсе пынипе Англи разведкин резидентчĕпе сыхăнусем организацилес тĕлĕшпе „ĕçлеççĕ“, вăл сыхăнува çирĕплетес тата ССР Союзĕн Ватам Ази чиккисенче чылай паллă разведчик тата авантюрист Лоуренс сахал мар ĕçленĕ.

Унтан провокаторсемпе патша охранкин агенчĕсем— Зеленский, Зубарев, Иванов пыраççĕ. Иванов кунпа пĕрлех тата Англи шпионĕ те пулнă.

Çак компани çумнех çынсене емелсем парса вĕлерекенсен ушкăнне—Левина, Плетнева, Казакова, Крючкова, Максимов-Диковскине тата вĕсемпе сыхăннисене ыттисене хушăр, вара çак блокăн та унта пулнисен кашнин моралла-политикăлла сăн-пичĕ вĕçне çитиех уççăн палăрса тăрать.

Акă мĕншĕн епĕр çапла калама пултаратпăр:—акă вăл етем кайăшĕсен çĕрĕк шăршăла купи, вĕсем нимĕн умĕнче те чарăнса тăман, нимрен те йĕрĕнмен, пурне те тума хатĕр заводсемпе чукунçул пуйăсĕсене сиктерсе йама, вылăхсене вĕлерсе пĕтерме, тырпула пăсма, çынсене вĕлерме, шпионаж тума тата тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнма хатĕр.

Халь ĕнтĕ Бухаринсен, Йагодасен, Крестинскисен, Рыковсен тата ытти сылтăммисен троцкиссен ылханлă, сутăнçла, бандитла ĕçĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине тухат. Вĕсем тăван çĕршыва сутса пурăннă, унăн оборонин çар вăрттăнлăхĕсемпе суту-илÿ тунă, вĕсем шпионсем, диверсантсем, сăтăрçăсем, сынвĕлеренсем, вăрăсем пулнă,—çаксене пурне те вĕсем фашисла правителствăсене Совет правителствине сирпĕтсе антарма, рабочисемпе хресченсен влаçне сирпĕтсе антарма, ĕлĕкхи пек тепĕр хут капиталиссемпе помещиксен влаçĕ туса хума, совет халăхĕн çĕршывне татăкăн-татăкăн пайласа пĕтерме, нацилĕ республикăсене татса илсе, вĕсене империалиссен колонийĕсем туса хума пулăшас тесе тунă.

Çавăн пек пулнă вĕсен хуçисен приказĕ, вĕсем çав приказа пĕтĕм вăйран тăрăшса мĕнле пултарнă таранах пурнăçа кĕртсе тăнă.

Çавăн пек вăл çынсем, çавăн пек вĕсен планĕсемпе шухăшĕсем, çавăн пек вĕсен намăслă та тĕлĕнмеле хăрушă преступленийĕсем.

Судпа айăпланакан Бухарин кунта мухтанчăклăн çапла каларĕ: вĕсем, сылтăммисем, капиталисăм хыççăн йурлакансем, капиталисăм реставрацийĕ çинчен калакан теорин „духовнăй“ хĕçпăшалĕпе троцкисăма хĕçпăшаллантарнă,—терĕ.

Çак ултавлă политикăлă пÿтсĕр суйĕç тата ССР Союзне хирĕçле йутçĕршыв шпионажĕн чи пысăк организаторĕсенчен пĕри Бухарин мĕнле „теори“ çинчен калать-ха?

Шуйттан ладăнран тарнă пекех, Бухарин хăйĕн айăпне йышăнассинчен тарать. Бухарин кунта хăйĕн айăпне тунать.

Пирте Бухарина хирĕç кăтартса панисем пур чухне çавăн пек тунни мĕн тĕшне тăрать-ха?

Çакна çеç астутарăп: мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи ларура Бухаринпа Рыков шпионла сыхăнусем тытнине тата Германипе Польшă разведкисене усă кÿрес тĕлĕшпе шпионла ĕç туса тăнине йăлтах палăртса панă.

Пирĕн пурин те, совет çĕрĕн патриочĕсен, çак процесран пурпĕрех уроксем тăвас пулать, çак суд процесĕн пахалăхĕ, паллах, çакăнта та пулать ĕнтĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв социалисăмлă çĕнтерÿсен те ейĕпе, капиталисăмлă пусмăрлăхран хăтарнă ĕçĕн телейĕпе тата хаваслăхĕпе килленет.

Совет государстви—рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви 20 çул хушши ĕнтĕ никам аркатайми чулту пек тăрать.

Советлă Социалисăмлă Республикăсен тăванла Союзне пĕрлешнĕ нумай йышлă халăхсем 20 çул хушши ĕнтĕ тимлĕн те çине тăрса тăрăшса ĕçлеççĕ, вăл союза социалисăмлă револющи çулпуçĕсен—Ленинпа Сталинăн генийĕпе туса хунă.

Çак 20 çул хушшинче ĕлĕк чухăн та вăйсăр пулнă çĕршыв пуйан та хăватлă çĕршыв, пултарулă тата никам çĕнтерейми çĕршыв пулса тăчĕ.

Çак 20 çул хушшинче Российă государстви социалисăмла государствă пулса тăчĕ.

Аслă Сталинла Конституци йышăннă Советсен Пĕтĕм Союзри Чрезвычайлă VIII-мĕш Сийесĕнче Сталин йулташ çапла каланă:

> „Пирĕн совет обществи халь тĕпрен илсен социалисăма пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ, социалисăмла йĕрке тунă, урăхла каласан марксиссем тепĕр тĕрлĕ—коммунисăмăн пирвайхи йе пуçламĕш сыпăкĕ тенине пурнăçа кĕртнĕ. Апла пулсан, пирĕн халь тĕпрен илсен коммунисăмăн пирвайхи сыпăкĕ—социалисăм пурнăçа кĕрсе çитнĕ ĕнтĕ. Коммунисăмăн çак сыпăкĕнчи тĕп принцип, пурте пĕлеççĕ, çакнашкал: „кашнинчен унăн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура“.

Социалисăм пирĕн халăхăн пурнăç йалине кĕчĕ, пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерчĕ. Çак социалисăмлă çĕнтерÿн тивĕçне йе унăн аслă вырăнне вăйсăрлатса хăварма пултаракан вăй тĕнчере çук. Ку вăл пирĕн çул çинче тăнă тата халь те тăракан йăвăрлăхсене пăхмасăрах çавăн пек пулса пырать. Ку вăл—пирĕн çине тăшманла пăхакан йутçĕршыв государствисем тата пирĕн çĕршыври експлоататорла классен хăйсен пурнăçне пурăнса иртерне тата вилсе пыракан йулашкисем пирĕн обществă малала ÿссе пырассине тытса чарма, пирĕн социалисăмлă çитĕнÿсене чăрмантарма, ССР Союзĕнче социалисăм тăвас тĕлĕшри пирĕн мирлĕ те творчествăлă ĕçе пур майсемпе те аркатса йаматăрăшнине пăхмасăрах çавăн пек пулса пырать.

Пĕр ÿстермесĕрех çапла калама пулать: совет истории иртнĕ 20 çулĕ хушшинче пирĕн государствăпа пирĕн халăх пирĕн çине тăшмансем тапăнмасăр пĕр çул та, пĕр уйăхта тата пĕр кун та иртнине пĕлмен.

Аслă Октяберĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласа историлĕ епохасенчен чи аслă епохăн—Сталинла Конституци епохин—йăлтăртатса тăракан кунĕсене çитиччен Советсен çамрăк республика експлоататорсемпе вĕсен шутсăр йышлă агентурин—троцкиссен, меньшевиксен, ес-ерсен, бухаринцăсен, зиновйевцăсен, муссаватиссен, дашнаксен, Грузипе Узбек тата ытти националисĕсен, черносотенцăсен, шургвардейцăсен, кадетсен, пупсен, кулаксен тата ыттисен, тата урăххисен класла тапăнувĕн вут-хĕмĕнчен тухмаст.

Икĕ тĕнче—капиталисăм тĕнчи тата социалисăм тĕнчи—пĕр пĕринпе нихăçан та килĕштермен вилĕмле тăшмансем пек тăнине çак процес пире татах тепĕр хут астутарчĕ, тата халиччен пулманла вăйлăн та çивĕччĕн астутарчĕ.

Капиталисăмлă йĕри-тавралăх ССР Союзĕнчи социалисăм ĕçĕшĕн хăрушă пулни çине пирĕн учителсем—Ленинпа Сталин пире пĕр хут мар çавăрăнтарса пăхтарнă.

1919 çулхи март уйăхĕнче РК(б) Партин VIII-мĕш Сийесĕнче Ленин çапла каланă:

> „Епĕр государствăра кăна мар, тата **государствăсен системинче** пурăнатпăр, çавăнпа совет республикĕ империалисăмлă государствăсемпе йунашар нумай вăхăт хушши пурăнма пултарĕ тесе шутлама çук. Кайран-кайран йе пĕри, йе тепри çĕнтерет. Анчах çав вăхăт çитиччен совет республикĕпе буржуалă государствăсем хушшинче чылай чи хăрушă тытăçусем пурĕ пĕрех пулĕç“ (т. XXIV стр. 122).

> „Асра тытас пулать,—вĕрентнĕ пире Ленин,—пирĕн çине пур тĕрлĕ тапăнса килесрен епĕр йаланах çÿç пĕрчи çинче“. (т. XXVII, стр. 117).

Сталин йулташ çак кунсенче пире капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен тата тепĕр хут аса илтерчĕ.

„Чăнахах та,—тесе çырнă Сталин йулташ хăйĕн Иванов йулташа панă историлĕ ответĕнче,—капиталисăмлă йĕритавралăх пурри çине куçа хупса пăхни, пирĕн тулашри тăшмансем, тĕслĕхрен, фашиссем май килсен ССРС çине вăрçăпа килме хăтланмĕç тесе шутлани кулăшла та айванла пулнă пулĕччĕ. Çакăн пек шухăшлама суккăр мухтанчăксем, йе халăха сывратма тăрăшакан вăрттăн тăшмансем кăна пултараççĕ.

Вăрçăлă интервенцире пĕчĕк ăнăçусем пулсассăнах интервентсем хăйсем йышăннă районсенче Совет стройне çĕмĕрсе тăкса тепĕр хут буржуалă строй туса хума хăтланмĕç тесе шутлани, унтан пĕртте кайа мар кулăшла пулнă пулĕччĕ. Деникинпа Колчак хăйсем йышăнса илнĕ районсенче буржуалă стройа тепĕр хут туса хуман-ши вара? Мĕнрен лайăхрах вара фашиссем Деникинпа Колчакран? Капиталисăмлă йĕритавралăх пур чухне вăрçăлă интервенципе реставраци тума хăтланасси пулма пултараймаст, теме тăмпайсем, йе

(Малали 3-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограмма.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Государствă йенчен айăплаканĕн — ССР Сойуз Прокурорĕн А. Й. ВЫШИНСКИЙ йулташăн сăмахĕ

(Малали)

хăйсем пире курайманнине мухтанчăклăхпа витсе хума тата халăха демобилизацилеме тăрăшакан вăрттăн тăшмансем анчах пултараççĕ“.

Интервенцири анăçусем çине пирĕн тăшмансем чылай çулсем хушши шанса тăчĕç, вĕсем ССРС ăшĕнчи совета хирĕçле тĕрлĕрен ушкăнсене совет влаçне хирĕç кĕрешме организацилесе, хавхалантарса пычĕç, çав ушкăнсем пулăшнипе хăйсен вăрă-хурахла шухăшĕсене пурнăçа кĕртме шутласа тăчĕç. ССР Сойузĕнче Совет влаçне хирĕç пулнă мĕн чухлĕ те пулин пысăк заговортан пĕри те унта йутçĕршыври капиталиссемпе çар çыннисем тӳррĕмĕх те активлăн хутшăнмасăр пулса иртмен.

1921 çулта пире Ленин çапла астутарнă:

„Пирĕн йĕритавра — пĕтĕм тĕнчери буржуази, вăл „хăйсен“ çыннисене тавăрса килес тесе, çĕрулпучĕсемпе буржуазине çĕнĕрен тăратса лартас тесе, пăркаланчăклă пулнă кашни минута сыхласа тăрать“ (т. XXVI, стр. 348).

Сталин йултăш пире капиталисăмлă йĕритавралăх хăрушлăхĕ çинчен ывăнма пĕлмесĕр астутарса тăрать, çакна ĕнентерӳлĕн кăтартса парать: „хамăр çĕршыври пурнăçĕ пĕтсе пыракан классем пире хирĕç тăрасси тулти тĕнчерен уйрăмăн пулса пымасть, вăл капиталисăмлă йĕритавралăхран пулăшу илсе тăрать“ („Ленинисăм ыйтăвĕсем“, стр 386).

Пуриншĕн те паллă, шахтинцăсем, промпартийцăсем сăтăрлă ĕçсем тунă кăна мар, вăрçă тухас-мĕн пулсан, вăл вăхăтра диверçилĕ ĕçсем тума хатĕрленнĕ кăна мар, тата пĕрмайах шпионла ĕçсем туса пынă. „Промпарти“ ĕçĕнче палăртнă тăрăх, çав шпионла ĕçе туса пымашкăн Рамзин йатарласах уйрăм комиссии те организациленĕ. Вăл комиссии председателĕ сăтăрçă-профессор Осадчий, вăл вăхăтра Госплан председателĕн заместителĕ пулнăскер, пулнă. „Промпартин“ программинче диверçилĕ ĕçсене Мускавра, Ленинградра, Донбасра, Уралра тăвасси çине çивчĕ тимлĕхпе пăхнă пулнă, çав диверçисене тăвас ĕç чукунçул кĕперĕсене сиктерсе сирпĕтес, електростанцисене сиктерсе сирпĕтес, заводсемпе фабрикăсене ĕçлеме чарса лартас çулпа пынă.

1933 çулта тăрă шыв çине кăларнă Англи инженерĕсен Торнтонăн, Макдоналдăн тата ыттисен, „Интеллидженс-Сервис“ агенчĕсен, пирĕн хăшпĕр електростанцисенче сăтăрлă тата диверçилĕ ĕçсем тăвассине организациленĕ, пулас интервенци валли опорлă пунктсем хатĕрленĕ çынсен ĕçĕ, — йутçĕршывсен разведкисем пирĕн çĕршывра шуйттанла ĕçсем туни çинчен каламасть-и вара?

Йулашкинчен, 1936—1937 çулсенче пулнă йулашки суд процесĕсем те — йутçĕршывсенчи полици охранкисен службинче тăнă, çав охранкăсен шпионла диверçилĕ-террорла агентури пулса тăнă троцкиссен, зиновйевцăсен, совета хирĕçле ытти елементсен шпионла-террорла банди тунă хăрушă тискер преступленисене тăрă шыв çине кăларнă процессем те çавăн çинченех каламаççĕ-и вара? Çапла, çапла, çав бандитла шайккăсен, хамăр совет сучĕн приговорĕсем тăрăх пĕтерсе хунăскерсен, хăрушă тискер преступленийĕсем ун çинчен туллийĕн ĕнентермеле калаççĕ, ун çинчен кăшкăраççĕ.

Çак суд процесĕ те çавнах туллин кăтартса пачĕ. Процесăн тĕп „геройĕсем“ — „сылтăмла-троцкисла блокăн“ организаторĕсем, социалисăмăн, хамăр тăван çĕршывăн, хамăр халăхăн тăрă шыв çине кăларнă тахçантанхи хайар тăшманĕсем пулса тăраççĕ.

Ку процес Совет государствипе Ленин — Сталин партине хирĕç пулнă çынсен кĕрешӳн итогне туса парать, вăл çынсем, — ăна суд следстви калама çук уççăн та ĕнентерӳлĕн кăтартса пачĕ, — хăйсен пĕтĕм пурнăçĕ тăршшĕнче маскăпа витĕнсе çӳренĕ, вĕсем çав кĕрешӳве халлхи вăхăтчен нумай малтанах пуçланă, вĕсем, йанравлă провокаторла сăмахсемпе витĕнсе, революципе пролетариатшăн мар ĕçленĕ, вĕсем контрреволюципе буржуазишĕн ĕçленĕ, вĕсем; хăйсен сутăнчăклă хура ĕçĕсене тума аванрах пултăр тесе, хăйсене тăрă шыв çине кăларасран нумайрах вăхăт пытанса пурăнас тесе, партине, Совет влаçне улталаса пурăннă.

Йĕрĕнчĕклĕ те ирсĕр преступниксем улталаса, икĕпитленсе пурăнса хăйсене тăрă шыв çине кăларас сехете йулашки вăхăтченех тăсса пыма пултарнă. Анчах вăл сехет çитрĕ, преступниксене тăрă шыв çине кăларнă, пĕтĕмпех те вĕçне çитийĕх тăрă шыв çине кăларнă.

Маскăна çурса пăрахнă. Вĕсен чăн-чăн сăн-пичĕ, вĕсен чăн-чăн сăнарĕ халь ĕнтĕ кашниншĕнех уççăн курăнса тăрать. Вĕсен мĕскĕн, намăслă кунçулĕ кашниншĕн уççăн курăнса тăнă пекех, вĕсен намăслă ĕçĕсем те кашниншĕн уççăн курăнса тăраççĕ.

Халĕ ĕнтĕ çак процес, троцкиссем фашисăм агентури пулса тăнине кăна мар, тата нумай вăхăт хушши маскăпа чейен витĕнсе пурăннă, хăйсене тăрă шыв çине кăларасран чейен пăрăнса пытанса пурăннă бухаринцăсене те, вĕсем çынвĕлерейсем, шпионсем тата провокаторсем пулса тăнине туллин те вĕçне çитийĕх тăрă шыв çине кăларчĕ.

Вĕсем çапла контрреволюцилĕ шайккă пулса тăнин пĕтĕм процесĕн, — апла пулма пуçлани вăл тахçанах палăрнă, ăна пирĕн парти тата Сталин йултăш тӳррĕмĕх хăй пĕр хут çеç те мар тăрă шыв çине кăларнă, — халь ĕнтĕ татăкланах палăрчĕ.

1918 çулта Совет государствин пуçлăхне Ленина хирĕç заговор тунинчен тытăнса, 1918 çулта хăйĕн преступлĕнилĕ аллине Ленин çине çĕкленинчен тытăнса, Бухарин хăйĕн çулне халь çапла вĕçленинчен урăхла вĕçлеме, — айăпланакансĕн çак намăслă тенкелĕ çинче, совет халăхĕн — çак курайми йата ылханса калакан халăхăн хайар, анчах тĕрĕс судне кĕтсе ларассинчен урăхла вĕçлеме пултарнă-ши вара!

Кулаксем социалисăма мирлĕн кĕрсе кайасси çинчен калакан йуйăçла „теорирен“ тытăнса, çак пĕтĕм вунă çул кушшинче партипе совет халăхне хирĕç вăрттăн кĕрешсе пырса, Бухарин хăйĕн политикăлă карйерне халь çапла вĕçленинчен урăхла вĕçлеме, халь те, хăйĕн, тĕн йулашки вилĕм сехечĕ умĕнче те пулин, пăркаланса та фигларланса вĕçленинчен урăхла вĕçлеме пултарнă-ши вара!

1930 çулта партин XVI-мĕш сиесĕнче Сталин йултăш, троцкисăмăн иккĕлĕхне, икĕпитлĕхне тăрă шыв çине кăларса, çапла кăтартса панă: „Хăйĕн сылтăм уклониссене хирĕçле пыракан „урă“ пек, имĕш, „атакисене“ троцкисăм (вăл ĕнтĕ маскăпа витĕнсе тăшман умĕнче кайала чакни) „йаланах вĕсемпе, маскăпа витĕнмен капитулянтсем пулса тăраканскерсемпе, блок тунипе вĕçленĕ факта ăнлантарса параканни“ çав иккĕлĕх пулса тăрать ĕнтĕ.

Троцкиссемпе сылтăмрисем — вĕсем капитулянтсем. Пĕрисем йанрашулă, провокацилĕ, „революцилĕ“ пушă сăмахсен маскипе витĕннĕ капитулянтсем, теприсем — маскăпа витĕнмен капитулянтсем.

Троцкиссемпе сылтăммисен позицийĕсем çапла тăванлă пулни, вĕсем йаланах пĕр-пĕрин патне туртăнни, йаланах блоксем тăвассине шырани, йулашкинчен, вĕсем партине хирĕç, Совет государствине, социалисăм строителствине хирĕç кĕрешнĕ тĕрлĕ тапхăрсенче çав блоксем пулни мĕнрен килет-ха?

Ку ĕнтĕ, паллах, пуринчен малтан троцкиссемпе сылтăммисен социаллă бази пĕр пек пулнăран килет. Ку ĕнтĕ троцкиссем те, сылтăммисем те социалисăм çитĕнӳвĕсене хирĕç тăракан, истори сцени çинчен мирлĕн те лăпкăн кайма килĕшмен капиталисăмлă елементсен вăйĕ пуснине палăртса тăнинчен килет.

Ку, епĕр ăна халь пĕлетпĕр ĕнтĕ, пĕрисем те, теприсем те пĕр хуçасем — ССР Сойузне хирĕçле йутçĕршыв государствисен генштабĕсемпе разведкисенче лараакан пĕр хуçасемех хушнипе ĕçлесе пынăран килет.

Троцкиссемпе бухаринцăсем нумай çул кайала контрреволюци лагерне кĕрсе ӳкнĕ. Троцкисăм тата сылтăммисем нумай çул ĕлĕкрех ĕнтĕ буржуалă контрреволюци хĕçпăшалне йатса çӳрекенсем пулса тăнă. Троцкиссемпе сылтăммисем нумай çулсем хушши ĕнтĕ Совет государствине хирĕç кĕрешме контрреволюцилĕ буржуази валли хĕçпăшал парса тăраççĕ. Троцкиссемпе сылтăммисем пĕр çав сутăнчăклă хура ĕçех тăваççĕ.

Сылтăммисемпе троцкиссем блок тăвасси кирек йепле пулсан та путмалах пулнă иккенне, çавăн пекех вăл блок йутçĕршыври фашисла разведкăсен агентури пулса тăмала пулнине фактсем пĕр иккĕленмеле мар туллин кăтартса параççĕ.

Сылтăм-троцкиссем В. И. Ленина хирĕç, социалисăм ĕçне хирĕç мĕнле кĕрешнĕ

Троцкиссемпе сылтăммисем Ленина хирĕç, социалисăма хирĕç, пролетарилĕ революци ССР Сойузĕнче социалисăмлă çĕнĕ обшчĕствă тăвас тĕлĕшпе геройла вăй хурса кĕрешнине хирĕç мĕнле çапăçнине, — кун умĕн пулнă икĕ процес Пйатаков, Зиновйев, Каменев, Радек, Смирнов тата ыттисен примерĕ çинче пур йенчен те тĕпĕ-йĕрĕпех туллин кăтартса пачĕç.

Манăн халь çак процесри хăшпĕр геройсен, пуриччен малтан айăпланакан Бухаринпа Рыковăн позицине, вĕсем хăйсене мĕнле тытнине çак йенчен кăтартса паракан хăшпĕр фактсене аса илтерес килет.

Темиçе кĕске справка.

1909 çул — Бухарин отзовисăм çумне пырса çыпçăнать.

1914—1917 çулсем (империалисăмлă вăрçă тапхăрĕ) — Бухарин „сулахай коммунис“, программă-минимума йышăнмасăр хирĕç тăрать, Ленина хирĕç кĕрешет.

1914 çул — вăл хăйĕн большевикла пичете хирĕçле, Ленин пичетне хирĕçле хаçатне кăларас планпа çӳрет.

1915 çулхи çуркунне — Бухарин троцкис. Берири конференцире вăл граждăн вăрçин лозунгне хирĕç, троцкисла-меншевикла „Наше слово“ хаçатпа пĕрлĕхлĕ пулассишĕн тухса калаçать. Ленин „О национальной гордости великороссов“ йатлă статйа çырать, Бухарин ăна, ку социал-патриотисăмăн палăрăвĕ пулать тесе, пăсса ăнлантарать.

1915 çулхи кĕркунне — Бухарин нацисен самоопределени правине хирĕç тăракан тезиссемпе тухать.

1916 çулхи феврал — Бухарин Голландири сулахай социал-демократсен çурма-анархисла программипе пĕр шухăшлă пулать.

1916 çулта Бухарин „Интернационал молодежи“ журналра государствă ыйтăвĕ пирки анархисла, Ленина хирĕçле шухăшсемпе, пролетариат диктатурине хирĕç статйа çырса кăларать.

„Тĕнчери хуçалăх тата империализăм“ йатлă статйара (1915 ç.), уйрăм çĕршывсенчи пролетариатăн уйрăм-уйрăм выступленийĕсем çĕнтерме пултараймаççĕ, текен троцкисла тезиса Бухарин уççăнах хӳтĕлет, тепĕр майлă каласан, Ленин каланă пек, Бухаринсем социалисăма... „грексен календарĕ тухиччен вăхăта“, урăхла каласан, „нихçан пулас çук вăхăта“ (Ленин, т. XIX, стр. 221) куçараççĕ. Владимир Илйич 1916 çулта ун çинчен çапла çырнă: вăл — Бухарин (пĕрре) елексене ĕненсе шанать тата (иккĕ) политикăра шуйттанла тĕрексĕр“. (Ленин, т. XX стр. 229).

„Вăрçă, — тесе çырнă Ленин, — ăна çурма анархисла идейăсем патне тĕксе йанă. Берири резолюцисене йышăннă канашлура (1915 ç. çуркунне) вăл тезиссем пачĕ... — тĕлсĕрлĕхĕн-айванлăхăн чи тӳпийĕ; намăс; çурма анархисăм“.

1916 çулта, ун çинчен епĕ калаччĕ, „Интернационал молодежи“ журналра Бухарин, пролетариат государствă çине принциплă йĕркепех хирĕçле пăхать текен, пур тĕрлĕ государствăна та çĕмересси çинчен калакан анархо-синдикалисла шухăша сарнă.

Кайарахпа, В. И. Ленин вилсен тепĕр çултан, Бухарин, вăл ыйтура: епĕ мар, Бухарин мар, Ленин йанăшнă, тесе намăссăрăн ĕнентерме хăтланса каланă.

1916—1917 çулсем — Бухарин Троцкипе пĕрле „Новый мир“ (Йорк) хаçата редакцилет, унта вăл социализăм пĕр çĕршывра çĕнтерме пултарнине йышăнмасть.

1917 çул — партин VI-мĕш Сиесĕнче Бухарин троцкисла схемăпа тухать. Октабĕр кунĕсенче, Роççийăра социалисăм çĕнтерме пултараймасть тесе, çĕнĕрен те çĕнĕрен çине тăрать.

1918 çул — Бухарин „сулахай коммунисăмăн“ лидерĕ. Ку епизода суд ларăвĕнче мĕн пур тимлĕхпе тĕплĕн пăхса тухнă.

1918 çулхи октабĕрĕн 8-мĕшĕнче Мускав совечĕн пленумĕнче Бухарин хăйĕн „сулахай коммунисăмĕ“ йанăш тесе пĕлтерет. Епĕр пĕлетпĕр, вăл Брестри килĕшӳве çĕмĕресшĕн активлăн кĕрешнине Бухарин судра йышăнмала килчĕ.

1919 çул — партин VIII-мĕш Сиесĕ — Бухарин каллех нацисен самоопределени правине хирĕç тухса калаçать.

Малала партин IX, X-мĕш Сиесĕсем пыраççĕ, вĕсенче Бухарин пĕр улшăнмасăр „хăйĕн“ çулйĕрне, партине хирĕç, Ленина хирĕç пыракан çулйĕрне тытса пырать.

1921 çулта Бухарин Троцкий интересĕсемшĕн буферла позици йышăнать, сутăнчăклăн хăтланса дискуççи чĕртса пырать, ун çине, Ленин сăмахĕпе каласан, „буфер кăраççинĕ“ йухтарса тăрать.

Ленина хирĕçле фракцире Бухарин Серебрйаковпа, Редекпа, Крестинскипе, Пйатаковпа тата ытти троцкиссемпе пĕрле пулса ĕçлет.

1920 çул вĕçĕ — 1921 çул пуçламĕшĕ — профсойузсем çинчен дискуççи пырать. Çĕршыв економикăлă çĕнĕ политикă çине куçма хатĕрленет, Бухарин „буфер“ ролне йышăнса ĕçлет, унтан пĕтĕмĕшпех Троцкий позицийĕсем çине куçать. X-мĕш Сиесра вара, „республикă çӳç пĕрчи çинче çакăнса тăрать“, тесе калать.

Ленин **1922 çулта** Бухарина тулти суту-илӳ монополине çĕмĕрме хăтланнăшăн шаккат. Ленин Бухарина тӳррĕмĕх спекулянт, вак буржуа, хресченсем хушшинчи çийелти кулакла сийе хӳтлекен вырăнçе хакласа тăрă шыв çине кăларать. (Ленин, т. XXVII ст. 381).

1923—24 çулсем — Бухарин Каменевпа тата Зиновйевпа пĕрле Сталин йултăша хирĕç блок тăвать.

1925 çул — Бухаринăн „пуйăр“ текен кулакла лозунгĕ.

1928 çул — парти Тĕпкомĕн Пленумĕнче Бухарин, манăн партипе хирĕçмели çук, тесе пĕлтерет тата çав вăхăтрах Каменевпа вăрттăн калаçусем тăвать, унпа вăрттăн кавара кĕрет. „Економис заметкисене“ çырать.

1929 çул — Бухарин „Правдара“ хăйĕн шухăшĕсем тĕрĕс марри çинчен пĕлтерет. Халь ĕнтĕ вăл судра, çав та тактикăлă маневр пулнине, ун чухне те, 1929 çулта, хăй çавăн пекех суйнине кăтартса пачĕ. Мĕншĕн тесен шăпах çав вăхăтра ĕнтĕ вăрттăн ĕçлекен организаци совет влаçне хирĕç алла хĕçпăшал тытса тухма пуçланă.

Çара сăмахсемлĕ пулас мар тесе, епĕ сире Бухарин, Рыков йулашкинчен Иванов, йепле Бухарин Çурçĕр Кавказра кĕрешӳ чĕртсе пыни çинчен, йепле вăл хăйĕн çак ĕçри ученикĕ те подручнăйĕ Слепков урлă совет влаçне хирĕç кулакла восстанисем организацилени çинчен, йепле вăл Йаковенкона Çĕпĕре йани çинчен, йепле вĕсене Бийск округĕнче тата ытти вырăнсенче провокацисем туса кулакла восстани çĕклеме май килни çинчен кăтартса панисене аса илтеретĕп. Аса илтеретĕп, шăпах çав вăхăтра Бухарин, пичетре çырса, çапла каланă: „пĕтĕм партипе пĕрле пур тĕрлĕ сулăнчăксене хирĕç татăклăн кĕрешес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурар“, тенĕ. Бухарин кунта та суйнă.

1929 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшĕнче „Правдара“ Бухарин статйа пичетлесе кăларать, вăл статйа вĕçĕнче хăйĕн йанăшĕсене шутласа тухса вĕсене сивлет. Вара çав вăхăтрах Каменевпа вăрттăн калаçусем иртерет.

Вăл большевисăмăн тăрă шыв çине кăларнă чи усал тăшманĕсемпе 1927 çулхи нойабĕр уйăхĕнче кăна Мускавпа Ленинград урамĕсенче Совет влаçне хирĕç совета хирĕçле демонстрацисем тунăскерсемпе блок тунă.

1930 çулта Бухарин каллех Тĕпкома зайавлени парать тата хăйĕн йанăшĕсене йышăнать, а ĕçре, Бухарин кăтартса панисенчен илтнĕ есĕр, ĕçре вара шăпах çав вăхăтра ĕнтĕ вăл, партипе правителствă руководителĕсене хирĕç террорла ĕçсем организацилесси çинчен Семеновпа калаçусем иртернĕ.

1933 çулхи йанвар уйăхĕнче ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Тĕп Контрол Комиççин пĕрлешӳлĕ Пленумĕнче Бухарин („Правда“ № 14) сăмах тухса калать. Хăйĕн çав сăмахĕнче вăл „А. П. Смирнов ушкăнне хайарран айăплама“ ыйтать, хăйĕн „сылтăм-оппортунисла, йалтах тĕрĕс мар обшчествăлă-политикăла установки“ çинчен, хăйĕн „парти умĕнчи, унăн руководстви умĕнчи, партин Тĕп Комитечĕ умĕнчи, рабочи класпа çĕршыв умĕнчи йанăшĕсем“ çинчен калать.

Ĕçре вара ку — „сылтăмла-троцкисла блок“ йĕркеленсе чăмăртаннă пирвайхи çул пулнă, вăл блок террор, шпионаж, диверçи, сăтăрлă ĕç задачисене тăван çĕршыва сутса тăшман йенне куçас, ССР Сойузĕнчен нацилĕ республикăсене татса илес задачăсене пурнăçа кĕртме тытăннă.

1934 çул пуçламĕшĕ — партин XVII-мĕш Сиесĕ — Бухарин сăмах тухса калать, çав сăмахра вăл „пĕтĕм оппозицисене тата тĕп хăрушлăх пулса тăракан сылтăм оппозицине, урăхла каласан, шăпах çав, тахçанхи вăхăтра епĕ хутшăнса тăнă оппозицине пĕр хĕрхенмĕсĕр çĕмĕрсе такнине“ ырлать.

Çав вăхăтрах хăй ушкăнĕн, чăн-чăн шпионсен, çынвĕлерейсен, разведчиксен ушкăнĕ пулса кайнă ушкăнĕн преступленилĕ ĕçне вăйлатас тесе вăйсене мобилизацилет.

1936 çул пуçламăшĕ. — Бухарин „Известия“ хаçатра çырнă статйинче вырăс халăхне, вăл „Обломовсен нацийĕ“ тесе мăшкалана. „Известия“ хаçатăн 1936 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче Бухарин хăй çавăн пек калани йанăш пулни çинчен пĕлтерет.

Çакнашкал ĕнтĕ Бухарин икĕпитлĕ, ултавлă, чейе Бухарин. Çакă вăл ыркăмалла-тискер, тата хисеплĕ-хайар çын, вăл, Максим Горкий „Елек етем пулнисен“ галлерейĕнчи пĕр геройĕ çинчен каланă пек, „тилĕне сыснаран пулçă ылханлă йăх“.

Ыттисем те унтан ырах мар — вĕсем те „геройсем“.

Айăпланакан Рыков. Большевиксен партине кĕриччен Рыков Саратовра ес-ерсемпе социал-демократсен пĕрлешӳлĕ партинче тăнă.

1909—1911 çулсем. Рыков çурма-троцкист, çурма-ликвидатор.

Апрелри конференци вăхăтĕнче. Рыковпа Каменев революцилĕ демократин „чĕрĕ вăйĕсене“ пĕрлештерессишĕн, урăхла каласан, ес-ерсемпе меншевиксен сойузĕшĕн тăнă.

1917 çулхи октабĕрте Рыков Каменевпа тата Зиновйевпа пĕрле дезертир пулса тăрать.

1917 çулхи декабĕрте Рыков Совет влаçĕн тĕрекĕ çук тесе кăшкăрать, вăл: „Йевропăра социалисăмла революци пулса иртмен вăхăтра кайа йулнă çĕршывра пĕтĕмпех большевикла влаç тытăнса тăма пултараймасть“ — тесе калать.

1920 çулта Рыков сапроновцăсемпе пĕрле Ленина хирĕç, коллегиле йертсе пырассишĕн тăнă.

Рыков Ленинăн ГОЭЛРО планне хирĕç, вăл обывателле „реалисăма“ пуçĕпех путса ларнă, кивĕ йăласем ăшне хăлха таранах путса ларçă (çапла çырнă ун çинчен Ленин патне Сталин йултăш унчухне).

Кайран? Кайран 1928, 1929, 1932 çулсенче — блоксем, центрсем; заговорсем, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнни.

Ытти айăпланакансем те унран ыра мар.

Акă вата троцкист тата Германи шпионĕ Крестинский, вăл хăйĕн предателле карйерине Владимир Илйич Ленин пурăннă чухнех пуçланă. Крестинский нимĕç разведкине шпионла сведенисем парса тăрать тата уншăн вăл Германи рейхсверĕнчен вăрттăнла троцкисла ĕçе усă тума ылттăн укçа хакĕпе çулсеренех 250 пиншер маркă илсе тăрать.

Акă тата çакăн пекех чи хайар та чи усал троцкист Розенголц, вăл 1923 çултанпах Германи шпионĕ тата 1926 çултанпах Англи шпионĕ пулнă.

1918 çулта Ленина хирĕç тунă заговор

1918 çулта Ленина хирĕç тунă заговорăн обстойателствине кунта тĕпчесе тухни çинчен кĕскен чарăнса тăма кирлĕ, тесе шутлатăп епĕ.

Малтанхи следствире те тата судра та Бухарин 1918 çултан, Бухарин „сулахайри“ тата сылтăм ес-ерсемпе, Троцкипе тата унăн ушкăнĕпе пĕрле организациленĕ çав тĕлĕнмеле хăрушă преступленисемшĕн, вĕсене хăшне-пĕрне пурнăçа кĕртнĕ, — истори умĕнче, рабочи клас умĕнче, етемлĕхĕн пĕтĕм тӳрĕ кăмăллă çыннисем умĕнче ответ тытассинчен пур майсемпе те пăрăнма хăтланчĕ. Троцкипе Бухарин революцине хирĕç тунă тамăкла преступленисен пĕтĕм таранлăхне, вĕсен предателле ĕçĕн пĕтĕм таранлăхне... тивĕçлипе хак парас тесен, 1918 çулхи фактсене, обстановкăна тата условисене аса илес пулать.

1918 çул. Çамрăк совет республикĕ, хăйĕн çулĕ çинчи калама çук пысăк йăварлăхсене çĕнтерме тата социалисăмла революцин çитĕнӳвĕсене çирĕплетсе тĕреклетме пĕтĕм вăй-хăватне пухать.

Çавăн пек условисенче миршĕн кĕрешни — пролетарилĕ революцин пĕтĕм малашлăхĕшĕн кĕрешни пулнă, мĕншĕн тесен унчухне унăн кунçулĕ йе пĕтсе лармала йе малала каймала пулнă.

Вăрçăпа килĕшӳ çинчен тăракан ыйту тĕпрен илсен пĕр ыйту патне çеç илсе пынă: **совет влаçĕ, совет государстви, совет çĕршывĕ пулĕ-и йе пулмĕ.**

Ленинăн генилĕ стратегийĕ ку ыйту çине: Совет влаçĕ пулать, тесе ответ пачĕ. Истори çак решенин тĕрĕслĕхне çирĕплетрĕ. Вăл çапла каларĕ: „пулмала“.

Ленинисăм наступленин искусствине кăна мар, вăл тата отступлени искусствине те вĕрентет.

„... Тĕрĕс наступлени тума тата тĕрĕс отступлени тума вĕренсе çитмесĕр, — çырнă Ленин, — çĕнтерме çук“ (т. XXV, стр. 177). Сталин йултăш ку тĕлĕшпе çапла каланă:

„Çакăн пек стратегин тĕллевĕ вăл — вăхăтпа усă курмала, тăшмана пур йенчен те пăсса хавшатмала, кайран вара наступлени çине куçма вăйсене пухмала.

Çакăн пек стратегин тĕслĕхне Брестра килĕшӳ туса çирĕплетнине шутлама пулать, вăл партине вăхăтпа усă курма, империалисăм лагерĕнчи çапăçусемпе усă курма, тăшман вăйĕсене пур йенчен те пăсса хавшатма, хресченсене хăйпе пĕрле сыхласа усрама тата Колчакпа Деникин çине наступлени тума вăйсене пухма май пачĕ“.

Çак стратеги, Ленинăн — Сталинăн стратегийĕ, пĕтĕмĕшпех ĕçпе кăтартрĕ. Вăл çĕнĕ Роççийăна тата совет влаçне вилес çĕртен çăлса хăварчĕ.

1925 çулта Сталин йултăш ку тĕлĕшпе çапла астутарчĕ:

„Халĕ ĕнтĕ темĕнле ухмах та курать, — тенĕ Ленин Брестри килĕшӳ хыççăн виçĕ çул кайрах, — Брестри килĕшӳ пире вăй илтернĕ тата пĕтĕм тĕнчери империалисăмăн вăйĕсене çĕмĕрнĕ уступкă пулнă“ („Вопросы ленинизма“, стр. 57).

Паллă, Троцкипе Бухарин хăйсемпе пĕр майлă етемсемпе пĕрле Брестри килĕшӳве пур майпа та пăсма хăтланнă.

Троцкий тата „сулахай“ ес-ерсем Гофман генералпа калаçнă чух хăйсене провокаторсем пек тыткаланă. Бухарин пуçпулса тăракан „сулахай коммуниссем“ Ленин, Сталин тата Свердлов йертсе пыракан Совет правителствин мирлĕ политикине урса кайсах хирĕç тăнă, вĕсем килĕшӳ тăвас тĕлĕшпе пыракан калаçусене татса пăрахса „революцилĕ вăрçă“ пуçлатпăр тесе пĕлтерме ыйтнă.

Хăйсен пăхмашкăн йанравлă, анчах чăннипе провокаторла сăмахĕсемпе тата лозунгĕсемпе, бухаринцăсемпе троцкиссем пирĕн партине ленинла çул çинчен айакала пăрса йама хăтланчĕç.

Малтанхи следствире 1937 çулхи ийунĕн 2-мĕшĕнче кăтартса панисенчен Бухарин Брестри килĕшӳ вăхăтĕнче вăл Ленина хирĕç, совет государствин пуçлăхĕ пулса тăракан çынна хирĕç, кĕрешнин чăн-чăн характерне пытарма хăтланчĕ.

Следстви çакна тупса палăртрĕ çакна кунта сире, судйе йултăшсем, пĕтĕм анлăшĕпе астутарма кирлĕ тесĕ шутлатăп епĕ: 1918 çулта Октабĕр революцийĕ хыççăн тӳрех, Брестри килĕшӳве туса çирĕплетнĕ вăхăтра, Бухарин тата унăн „сулахай коммуниссем“ текен ушкăнĕ тата Троцкипе унăн ушкăнĕ, „сулахай“ ес-ерсемпе пĕрле, Ленина хирĕç, совет правителствин пуçлăхĕ пулса тăракан çынна хирĕç, заговор организациленĕ.

Бухаринăн тата ытти заговорщиксен тĕллевĕ, вăл следстви материалĕсенчен те курăнать, Брестри килĕшӳве пăсасси, Совет правителствине сирпĕтсе антарасси, Ленина, Сталина тата Свердлова арĕслесси тата вĕсене вĕлерсе бухаринцăсенчен, вĕсем унчухне маскăланас тесе хăйсене „сулахай коммуниссем“ тесе йат панă, троцкиссенчен тата „сулахай“ ес-ерсенчен çĕнĕ правителствă туса хурасси пулнă.

Епĕр, суд умĕнче пулнă свиделсене астăватпăр, вĕсем кăтартса панисене лайăх астăватпăр, вĕсене епĕр куртăмăр, епĕр вĕсем каланине итлерĕмĕр, епĕр астăватпăр, вĕсен сăмахĕсем Бухарин пуçĕ çине, Ленинла Халăх Комиссарĕсен Советне хирĕçле кĕрешӳве чĕрĕ вăй парса хавхалантаракан çынăн пуçĕ çине, Совет государствине хирĕç, суд следствипе ăна пĕтĕмĕшпех курăнмала тупса палăртнă, заговор тата восстани организацилекен Бухарин пуçĕ çине, Совет правителствине йертсе пыраканĕсене Ленин, Сталин тата Свердлов йултăшсене вĕлерме хĕтĕртекен çынăн пуçĕ çине йăвăр тăхлан пекех ӳкрĕç.

(Йулашки çитес номĕрте пулать).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

ПРИГОВОР

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн ячĕпе ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ

ÇАК СОСТАВПА:

Председател—ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги Председателĕ Арми çар йурисĕ В. В. УЉРИХ.

Членсем: ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги Председателĕн заместителĕ Корпус çар йурисĕ И. О. МАТУЛЕВИЧ тата

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Сар Коллеги Членĕ Дивизи çар йурисĕ Б. И. ИЙЕВЛЕВ.

Секретар—пĕрремĕш рангри çар йурисĕ А. А. БАТНЕР.

Государствăн ячĕпе айăплакан — ССР Союзĕн Прокурорĕ А. Я. Вышинский йулташ тата защитниксен Мускав Коллегии членĕсем **И. Д. Брауде** тата **Н. В. Коммодов** йулташсем хутшăннипе 1938 ç. мартăн 2 — 13-мĕшĕсенче, Мускав хулинче, судăн уçă ларăвĕнче çак çынсене айăплас ĕçе пăхса тухрĕ:

1. **Бухарин** Николай Иванович, 1888 çулта çуралнă;
2. **Рыков** Алексей Иванович, 1881 çулта çуралнă;
3. **Иагода** Генрих Григорйевич, 1891 çулта çуралнă;
4. **Крестинский** Николай Николайевич 1883 çулта çуралнă;
5. **Раковский** Христиан Георгийевич, 1873 çулта çуралнă;
6. **Розенгољц** Аркадий Павлович, 1889 çулта çуралнă;
7. **Иванов** Владимир Иванович, 1893 çулта çуралнă;
8. **Чернов** Михаил Александрович, 1891 çулта çуралнă;
9. **Грињко** Григорий Федорович, 1890 çулта çуралнă;
10. **Зеленский** Йсаак Абрамович. 1890 çулта çуралнă;
11. **Бессонов** Сергей Алексейевич, 1892 çулта çуралнă;
12. **Икрамов** Акмаљ 1898 çулта çуралнă;
13. **Ходжайев** Файзулла, 1896 çулта çуралнă;
14. **Шарангович** Васили Фомич, 1897 çулта çуралнă;
15. **Зубарев** Прокопий Тимофейевич, 1886 çулта çуралнă;
16. **Буланов** Павел Петрович. 1895 çулта çуралнă;
17. **Левин** Лев Григорйевич, 1870 çулта çуралнă;
18. **Плетнев** Дмитрий Дмитрийевич, 1872 çулта çуралнă;
19. **Казаков** Игнатий Николайевич, 1891 çулта çуралнă;
20. **Максимов-Диковский** Венямин Адамович (Абрамович), 1900 çулта çуралнă тата
21. **Крючков** Петр Петрович, 1889 çулта çуралнă. Вĕсем пурте преступленисем тунăшăн РСФСР УК 58—1а, 58—2, 58—7, 58—8 58—9 тата 58—11 статйисем тăрăх айăпланаççĕ. **Иванов, Зеленский** тата **Зубарев,** унсăр пуçне, РСФСР УК 58—13 статйинче кăтартнă преступленисем тунăшăн айăпланаççĕ.

Малтан тата судра ыйтса тĕпченĕ тăрăх çакна палăртса çирĕплетнĕ:

Судпа айăпланакан **Бухарин, Рыков, Иагода, Крестинский, Розенгољц, Грињко, Шарангович, Ходжайев, Икрамов, Иванов, Зубарев, Зеленский** тата **Чернов,** совет влаçĕн хайар тăшманĕсем пулса, ССР Союзĕшĕн тăшманла йутçĕршыв государствисен разведкисем панă задани тăрăх 1932—1933 çулсенче „сылтăмла-троцкисла блок“ ятлă заговорла ушкăн организациленĕ, çав блок троцкиссен, сылтăммисен, зиновйевецсен, меншевиксен, есерсен, Украинăри, Белоруççири, Грузири, Армени, Азербайджанри, Вăтам-Ази республикисенчи буржуалă националисен совета хирĕçле вăрттăн ĕçлекен ушкăнĕсене пĕрлештернĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок“, хăйĕн умне ССР Союзĕнчи халăхи социалисăмлă общество тата государствăлă стройа сирпĕтсе антарас, Совет Союзĕн економикă тата оборонă вăй-хăватне ишĕлтерес тата ССР Союзне вăрçăра çĕмĕрсе тăкса ăна татăкăн-татăкăн пайлана çĕрте йутçĕршыв агрессорĕсене пулăшас тĕллĕпе диверçилĕ-сăтăрла, терроррла, шпионла-изменникла ĕçсем тунипе ССР Союзĕнче ĕлĕкхи пек тепĕр хут капитализăм тата буржуази влаçĕ туса хурас тĕллев лартнă.

ССР Союзĕнче вĕсене ваљђи нимĕнле тĕрек те пулманнипе, „сылтăмла-троцкисла блок“ руководителĕсем хăйсен преступленилĕ ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртес тĕллевпе халăх тăшманĕ **Л. Троцкий** урлă тата совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блокра“ тăнă уйрăм çынсем урлă ССР Союзĕнче Совет влаçне сирпĕтсе антарма хĕçпăшаллă вăйпа пулăшасси çинчен хăшпĕр йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе килĕшӳ тунă, çав килĕшӳре, хĕçпăшаллă вăйпа пулăшнăшăн ССР Союзне татăкăн-татăкăн пайласа униран Украинăна, Белоруççине, Приморйене, Вăтам Азири тата Кавказри республикăсене татса илсе асăннă йутçĕршыв государствисене памали условисем пулнă.

„Сылтăмла-троцкисла блок“ йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе çакăн пек изменникла çăмăллăнах калаçса татăлни вăл—совета хирĕçле заговора йертсе пыракансем тӳррĕмĕнех йутçĕршыв разведкисен агенчĕсем пулнинчен килнĕ, вĕсем çав разведкăсене усă кӳрес тĕллĕпе нумай çулсем хушши шпионла ĕç туса пурăннă.

Крестинский халăх тăшманĕ—Германипе Англи разведкисен агенчĕ **Л. Троцкий** тӳррĕмĕнех панă задани тăрăх Германи рейхсверĕпе 1921 çулта изменникла çыхăнса кайнă та, 1937 çулта хăйне арестленĕ куннччен Германи шпионĕ пулса пурăннă, хăйĕн шпионла ĕçĕшĕн тата троцкисла организаци преступленилĕ ĕçĕ ваљђи ылттăн укçа шучĕпе çулсерен 250 пин Германи марки илсе тăнă.

Розенгољц Германин генерељнăй штабĕ ваљђи 1923 çулта, Англи разведки ваљђи 1926 çулта шпионла ĕç тума пуçланă.

Раковский 1924 çултанпа Англи разведкин агенчĕ тата 1934 çултанпа Йапони шпионĕ пулса пурăннă.

Чернов паллă меншевик-емигрант Дан пулăшнипе Германи разведкипе çыхăнса, Германинче усă кӳрес тĕллĕшпе 1928 çулта шпионла ĕç тума пуçланă.

Шаранговича Пољшă разведки хăй алпне йавăçтарса шпионла ĕç тума ССР Союзне 1921 çулта йанă, вăл хăйне арестличчен Пољшă шпионĕ пулса пурăннă.

Грињко 1932 çултанпа Германи тата Пољшă шпионĕ пулса пурăннă.

Халăх тăшманĕ **Л. Троцкий** тата „сылтăмла-троцкисла блока“ йертсе пыракансем—**Бухарин, Рыков** тата **Йагода** панă задани тăрăх — „сылтăмла-троцкисла блок“ членĕсем **Розенгољц, Крестинский, Раковский, Грињко** тата **Бессонов** уççăнах изменникла тĕллевсемпе ССР Союзĕшĕн тăшманла йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе тӳррĕнех çыхăннă та, йутçĕршыв агрессорĕсене вĕсем Совет Союзĕ çине тапăнас пулсан мĕнле майпа пулăшу парасси çинчен (терроррла, диверçилĕ-сăтăрла актсем, шпионаж организацилесси) çав йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе калаçусем туса иртернĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок“ руководителĕсем, вăл шутрах **Рыков, Бухарин** тата **Йагода,** хăйсемпе пĕрлисен шпионла ĕçĕ çинчен йăлтах пĕлнĕ çеç те мар, тата шпионла çыхăнусене сарассине пур майсемпе те хавхалантарса пынă тата йутçĕршыв интервенцине хатĕрлеме васкатса, „сылтăмла-троцкисла блокра“ тăракансене вĕсем йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе изменникла калаçусем иртернĕ чухне хăйсем кăтартусем панă.

Йутçĕршыв разведкисем тӳррĕмĕнех панă директивăсем тăрăх „сылтăмла-троцкисла блокра“ пулнисем диверçилĕ-сăтăрла ушкăнсем организациленĕ, çав ушкăнсем промышленноçăн, транспортăн, йалхуçалăхĕн, таварçаврăнăш системин чылай предприйатисенче пулнă тата блокра тăнисем, çĕршывăн хуçалăхлă пурнăçне чарса лартса Совет Союзĕн оборонă пултарулăхне вăйсăрлатас задачпа, ишĕлтерӳлĕ ĕçсем туса пурăннă.

Йапони разведки кăтартса панисем тăрăх „сылтăмла-троцкисла блокра“ пулнисем Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнче „Волочайевка“ станцинче çар грузĕ-тийенĕ пуйăса тата Хор-Дормидонтовка перегонра 501-мĕш № пуйăса ӳпĕнтерсе йанă, çавăл пекех тата Чучанри шахтăсенче темиçе диверçи те тунă. Çак диверçисем вăхăтĕнче кашнинчĕх çынсем вилнĕ.

Халăх тăшманĕ **Л. Троцкий** панă кăтарту тăрăх тата йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе калаçса татăлнă тăрăх **Розенгољц** Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн системинче сăтăрла ĕç туса пынă, ăна вăл Германипе Йапонине пулăшас майпа тунă, çав сăтăрла ĕç ССР Союзне економикă йенчен сийен кӳнĕ. Кунсăр пуçне, ваљутăпа тĕрлĕрен комбинацисем туса **Розенгољц Троцкине** йаланах укçа парса тăнă.

Чернов, Германи разведкин заданийĕ тата Рыков кăтартса панисем тăрăх, вăл хăй ССР Союзĕн çĕрĕç органĕсенче ответлă вырăнта пулнипе хăйпе пĕр пулнă çынсем урлă йалхуçалăх куљтурисен тухăçлăхне чакарас тата йалхуçалăхĕнчи мобилизаци запасĕсене пăсас тĕллĕшпе, лашасен, майракалă шултра выљăхсен йышне чакарас тĕллĕшпе чылай пысăк диверçилĕ-сăтăрлă актсем организациленĕ çĕрте усă курнă, уйрăмăн илсен, сикекен чирсене йурийех сарнă, çакна пула пĕр Хĕвелтухăç Çĕпĕртре кăна 1936 çулта 25 пине йахăн лаша вилнĕ.

Грињко, „сылтăмла-троцкисла“ блок“ руководителĕсемпе Германи разведкин заданийĕ тăрăх, халăха тарăхтарса йарас тата çапла тунипе хăй майлисене йавăçтарассине çăмăллатас тĕллевпе, Финанс Халăх Комиссариачĕн системинче сăтăрлă ĕçе анлăн туса пынă, çав сăтăрлă ĕç ĕçукçи тӳлессине тытса тăнинче, перекет кассисемпе халăха начар пулăшнинче, хресченсенчен хăшпĕр налогсене саккунсăр пухнинче тата ытти сăтăрлă мероприйатисенче палăрнă.

Шарангович, Белоруççинчи националфашисла организаци руководителĕсенчен пĕри пулса, Пољшăри разведкă органĕсем тата „сылтăмла-троцкисла блок“ руководителĕсем — **Рыков** тата ыттисем панă задани тăрăх, Белоруççинчи йалхуçалăхĕнче, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тата промышленноçра диверçилĕ-сăтăрлă ĕçе анлăн сарса йанă, çапла тунипе агрессорсем БСС Республикĕ çине тапăнассăн пулсан, агрессорсен задачисене пурнăçа кĕртессине çăмăллатнă.

Йкрамовпа Ходжайев, Бухарин панă кăтарту тăрăх, Узбекистанра халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраçлисенче диверçилĕ-сăтăрлă ĕçе пысăккăн сарса йанă, çакпа вĕсем халăха тарăхтарас та, çапла тунипе вара йутçĕршыв интервенцийĕ вăхăтĕнче Совет влаçне хирĕç хĕçпăшалпа тухма майлă условисем хатĕрлес тĕллевпе тунă.

Зеленский Центросойузра тата потребител кооперацин системинче сăтăрлă ушкăн организациленĕ тата вĕсем, пулăшнипе, халăха тарăхтарса йарас тĕллевпе, апат-çимĕç продуктисене пăснă та çĕртнĕ, унта кантăк катăкĕсемпе пăтасем йанă, кооперацин вырăнсенчи магазинĕсемпе лавкисене кунсерен кирлĕ йапаласене йурийех йамасăр тăнă.

Иванов, Бухарин заданийĕ тăрăх, Çурçĕр крайĕн вăрман хуçалăхĕнче сăтăрлă диверçилĕ ĕç туса пынă.

Зубарев, сылтăммисен вăрттăн организацине активлăн хутшăнса ĕçленĕскер, **Рыков** заданийĕ тăрăх РСФСР Республикĕн чылай облаçĕсенче йалхуçалăхĕнче сăтăрланă.

Диверçилĕ-сăтăрлă ĕçе активлăн туса пынипе пĕрлех, „сылтăмла-троцкисла блокра“ пулнисем, Германи, Йапони тата Пољшă разведкисен заданийĕ тăрăх **Рыковпа Бухарин** тӳррĕмĕнех йертсе пынипе тата **Иванов, Ходжайев, Икрамов, Зубарев, Шарангович, Грињко** тата **Зеленский** активлăн хутшăнса ĕçленипе ССР Союзне хирĕç интервенци пуçланă тĕле Хĕрлĕ Çар тылĕнче хĕçпăшаллă выступленисем организацилеме Çĕпĕрте, Çурçĕр Кавказра, Украинăра, Белоруççинче, Узбекистанра тата Совет Союзĕн ытти вырăнĕсенче те бандитла-повстанчествăлă кулакла кадăрсем хатĕрлесе пынă.

Бандитла-повстанчествăлă кулакла никĕсе сарас тĕллевпе, „сылтăмла-троцкисла блок“ руководителĕсен решенийĕ тăрăх, **Бухарин** ССР Союзĕнче ĕçлесе тăнă ес-ерла организаци вăрттăн Тĕпкомĕпе, çавăн пекех тата чикĕ леш йенчи есерсен Тĕпкомĕпе организацилĕ çыхăну пуçласа йанă.

Йутçĕршыв разведкисемпе тӳрех калаçса татăлнă тăрăх, тата халăх тăшманĕн **Л. Троцкин** заданийĕ тăрăх „сылтăмла-троцкисла блок“ ПСК(б) Партипе Совет Правителствин руководителĕсене хирĕç чылай терроррла актсем организациленĕ.

1934 çулта „сылтăмла-троцкисла блока“ йертсе пыракансенчен пĕри **Рыков—Сталин, Молотов, Каганович** тата **Ворошилов** йулташсене хирĕç терроррла актсем хатĕрлесе туса иртерме хăй терроррла ушкăн тунă.

1937 çулхи августра **Розенгољц** хăй **Сталин** йулташа хирĕç терроррла акт тума хăтланнă, çав тĕллĕшпе вăл пĕр хутчен мар **Сталин** йулташ патĕнче йышăнура пуласшăн тăрăшнă.

Ленинградри троцкисла - зиновйевла терроррла центр 1934 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче **С. М. Кирова** тискеррĕн вĕлересине,—çак ĕç тăрăх ăна малтанхи следствире тата суд следствинче палăртса çирĕплетнĕ,—„сылтăмла-троцкисла блок“ решенийĕ тăрăх организациленĕ, тата çав терроррла акта организациленĕ çĕре судпа айăпланакан **Йагода** тӳррĕмĕнех хутшăннă, вăл Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Ленинградри управленинче ĕçленĕ хăйĕн çыннисене çав преступленине тума кансĕрлемеле марри çинчен йатарласа кăтартусем панă.

Халăх тăшманĕ **Л. Троцкий** кăтарту панă тăрăх „сылтăмла - троцкисла блок“ руководителĕсем 1934 çулта аслă пролетарилĕ писателе **Максим Горькине** вĕлерме решени йышăннă. Çак тĕллĕнмеле тискер терроррла акта организацилеме **Йагодана** хушнă, вăл вара заговор тĕллевĕсем çинчен **М. Горькин** килти врачне — **Левин** доктора, унтан **Плетнев** врача каласа панă та, вĕсене сăтăрлă майсемпе сиплесе **М. Горькине** вĕлерме хушнă, çак преступленилĕ ĕçре **Левин** доктор йертсе пынипе вăл хушува ĕçе кĕртнĕ. „Сылтăмла-троцкисла блокра“ тăракансем—**М. Горькин** секретарĕ пулнă **Крючковпа** Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн секретарĕ пулнă **Буланов** çак тискер ĕçе тунă çĕре активлăн хутшăннă.

„Сылтăмла-троцкисла блок“ руководителĕсен решенийĕ тăрăх **Йагода** ОГПУ Председателне **В. Р. Менжинский** йулташа тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председател Заместителне **В. В. Куйбышев** йулташа сăтăрлă майсемпе сиплесе вĕлерессипе организациленĕ, **Куйбышев** йулташа хирĕç терроррла акт тунă çĕре **Левин** тата Куйбышев секретарĕ пулнă, сылтăммисен вăрттăн организацинче 1928 çултанпа тăнă **Максимов-Диковский** тӳррĕмĕнех хутшăннă, **В. Р. Менжинский** йулташа хирĕç терроррла акт тунă çĕре **Буланов** тата заговорщиксен ушкăнне **Йагодапа Левин** йавăçтарса кĕртнĕ врач **Казаков** тӳррĕмĕнех хутшăннă.

Кунсăр пуçне тата, **Левинпа Крючков** тӳрех **Йагода** панă задани тăрăх, **А. М. Горький** ывăлне—**М. А. Пешкова** сăтăрлă майсемпе сиплесе вĕлернине палăртса çирĕплетнĕ.

1936 çулхи çентăбĕрте **Н. И. Йежов** йулташа ССР Союзĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне уйăрса лартнă май, „сылтăмла-троцкисла блок“, совета хирĕçле кадрсене пĕтĕмĕшпех тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкасран шикленсе, **Йагодана Н. И. Йежов** тĕллĕшпе терроррла акт тума хушнă.

Çак тискер хушува пурнăçа кĕртсе, **Йагода Буланов** тӳррĕмĕнех хутшăннипе çавна ваљђи йатарласа хатĕрленĕ паркăмăшпа **Н. И. Йежов** йулташ организмне йеринпе отравит туса 1936 çулта кĕркунне **Н. И. Йежов** йулташ пурнăçĕ çине алă çĕкленĕ, çав майпа **Н. И. Йежов** сывлăхне чылай сийен кӳнĕ.

Кунсăр пуçне тата çакна палăртса çирĕплетнĕ: **Бухарин** сылтăммисен совета хирĕçле организаци центрĕн решенийĕ тăрăх 1930 çултах есер бойевикпа **—Володарский** йулташа вĕлерессине тата 1919 çулта **В. И. Ленин** пурнăçĕ çине алă çĕклессине организациленĕ **Семеновпа** ПСК(б) Партипе Совет Правителствин руководителĕсене хирĕç терроррла актсем тума хатĕрленес тата вăл актсене тăвас тесе вăл чылай терроррла ушкăнсем тăвасси çинчен калаçса татăлнă.

1918 çулта **Бухарин** тата вăл пуçпулса йертсе пыракан „сулахай“ коммунистсен ушкăнĕ, **Троцкипе** тата „сулахай“ ес-ерсемпе пĕрле, Совет Правителствине хирĕç заговор организациленине те палăртса çирĕплетнĕ.

Бухарин тата заговор тăрăх хăйĕнпе пĕр шухăшлăн ĕçлекенсем Брестри килĕшӳве аркатса йарас, Совет Правителствине сирпĕтсе антарас, **В. И. Ленина, И. В. Сталина** тата **Й. М. Свердлова** арестлес те вĕлерес тата бухаринçăсенчен, троцкиссемпе „сулахай“ есерсенчен çĕнĕ правителствă туса хурас тĕллев тытнă.

Заговор планне пурнăçа кĕртсе, „сулахай“ ес-ерсем 1918 çулхи ијуљте, **Бухарин** пĕлсе тăнă çĕртех тата килĕшӳ панипе, Совет Правителствине сирпĕтсе антарас тĕллевпе Мускавра пăлхав пуçласа йанă; кунта çакна палăртса çирĕплетнĕ: ес-еркă **Каплан** 1918 çулхи августра **В. И. Ленин** пурнăçĕ çине алă çĕклени вăл—**Бухарин** пуçпулса йертсе пыракан „сулахай“ коммунистсен тата вĕсемпе пĕр шухăшлăн ĕçлекен „сулахай“ тата сылтăм ес-ерсен преступленийĕ ĕмĕчĕсен тӳрĕ резуљтачĕ пулнă.

Малтанхи следствире тата суд следствинче çакна палăртса çирĕплетнĕ: çак ĕç тăрăх судпа айăпланакансем—**Зеленский, Иванов** тата **Зубарев** царисăм вăхăтĕнчех рабочи класăн революцилĕ йухăмĕпе кĕрешес çул çине тăнă.

Зеленский 1911 çултан пуçласа 1913 çула çитиччен Самарти жандрм управленин агент-провокаторĕ пулса пурăннă.

Иванов 1911 çултан пуçласа 1916 çула çитиччен Мускавра тата ытти хуласенче охранкă пайĕпе жандарм управленин агент-провокаторĕ пулса пурăннă.

Зубарев, 1908 çулта Котелнич хулинче агент-провокаторсен хисепне кӳртсе йавăçтарнăскер, 1917 çулччченех провокацилĕ ĕç туса пурăннă.

Çапла вара ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ 1. **Н. И. Бухарин,** 2. **А. И. Рыков,** 3. **Г. Г. Йагода,** 4. **Н. Н. Крестинский,** 5. **Х. Г. Раковский,** 6. **А. П. Розенгољц,** 7. **В. И. Иванов,** 8. **М. А. Чернов,** 9. **Г. Ф. Грињко,** 10. **И. А. Зеленский,** 11. **С. А. Бессонов.** 12. **А. Икрамов,** 13. **Ф. Ходжайев,** 14. **В. Ф. Шарангович,** 15. **П. Т. Зубарев,** 16. **П. П. Буланов,** 17. **Л. Г. Левин,** 18. **Д. Д. Плетнев,** 19. **И. Н. Казаков,** 20. **В. А. Максимов-Диковский** тата 21. **П. П. Крючков** çакăншăн айăпланине палăртса çирĕплетрĕ:—вĕсем, тӳрех йутçĕршыв государствисен разведкисем панă задани тăрăх ĕçлесе тăнă „сылтăмла-троцкисла блок“ ятлă заговорла ушкăна активлăн хутшăннăскерсем, изменникла-шпионла, диверçилĕ-сăтăрлă, терроррла ĕç туса тăнă, вăрçăра Совет Союзне çĕнтерсе татăкăн-татăкăн пайлас тата унран Украинăна, Белоруççине, Вăтам-Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Приморйепе татса илсе ССР Союзĕ çине тăшманла пăхакан йутçĕршыв государствисене усă курма парас тĕллевпе çав государствăсене ССР Союзĕ çине вăрçăна тапăнма провокаци тунă, ССР Союзĕнчи халăхи социалисăмлă обществăлă тата государствăлă стройа сирпĕтсе антарса ССР Союзĕнче ĕлĕкхи пек капитализăм тата буржуази влаçĕ туса хурассине хăйсен тĕп тĕллевĕ тунă, урăхла каласан, вĕсем государствăна хирĕç питĕ пысăк та йавăр преступленисем тунăшăн, РСФСР Уголовлă Кодексин 58—1а, 58—2, 58—7, 58 — 8, 58 — 9 тата 58—11-мĕш статйисемпе айăпламали преступленисем тунăшăн, **Иванов, Зеленский** тата **Зубарев,** кунсăр пуçне, РСФСР Уголовлă Кодексин 58—13-мĕш статйипе айăпламали преступленисем тунăшăн айăпline палăртса çирĕплетнĕ.

Çакăнта каланисем тăрăх тата РСФСР Республикĕн Уголовлă-Процессуалă Кодексин 319-мĕшпе 320-мĕш статйисене хисепе илсе **ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ çакăн пек приговор йышăнчĕ:**

1. Николай Иванович **Бухарина,**
2. Алексей Иванович **Рыкова,**
3. Генрих Григорйевич **Йагодана,**
4. Николай Николайевич **Крестинскине,**
5. Аркадий Павлович **Розенгољца,**
6. Владимир Иванович **Иванова,**
7. Михаил Александрович **Чернова,**
8. Григорий Федорович **Грињкона,**
9. Исаак Абрамович **Зеленскине,**
10. Акмаљ **Икрамова,**
11. Файзулла **Ходжайева,**
12. Василий Фомич **Шаранговича,**
13. Прокопий Тимофейевич **Зубарева,**
14. Павел Петрович **Буланова,**
15. Лев Григорйевич **Левина,**
16. Игнатий Николайевич **Казакова,**
17. Венямин Адамович (Абрамович) **Максимов-Диковскине** тата
18. Петр Петрович **Крючкова—**

—уголовлă наказанин чи пысăк висине айăпласа—персе вĕлермеле, харпăрхăйсен пĕтĕм пурлăхне конфискацилемеле.

19. Дмитрий Дмитрийевич **Плетнева, В. В. Куйбышевпа А. М. Горький** йулташсене вĕлернĕ çĕре тӳррĕмĕнех активлăн хутшăнман тесе, анчах та çак преступление тума пулăшаканскерне,—**25 çул хушши тĕрмере хупса усрамала** тăвас, тĕрмерен тухсан 5 çуллăха политикăлă правасемсĕр хăварас тата унăн хăйĕн пĕтĕм пурлăхне конфискацилес.

20. Христиан Григорйевич **Раковскине** тата

21. Сергей Алексейевич **Бессонова** терроррла тата диверçилĕ - сăтăрлă ĕçсем организациленĕ çĕре тӳрех хутшăнман тесе—**Раковскине 20 çул** тата **Бессонова 15 çул хушши тĕрмере хупса усрамала** тăвас, тĕрмерен ларса тухсан кашнине 5 çул хушши политикăлă правасемсĕр хăварас тата вĕсен харпăрхăйĕн пĕтĕм пурлăхĕсене конфискацилес.

Плетневăн, Раковскин тата **Бессоновăн** тĕрмере лармали срукне вĕсене арестленĕ кунран пуçласа шутлас.

Суд Председателĕ—ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги Председателĕ Арми çар йурисĕ В. УЉРИХ.

Членсем: ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги Председателĕн заместителĕ—Корпус çар йурисĕ И. МАТУЛЕВИЧ.

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги Членĕ—Дивизи çар йурисĕ Б. ИЙЕВЛЕВ.

Бљум Францин çĕнĕ правителствине организациленĕ

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Леон Бљум—Францири социалисла парти руководителĕсенчен пĕри—Францин çĕнĕ правителствине организациленĕ. Правителства составне 15 социалис, 15 радикал-социалис, республикăла социалисла союзăн 3 членĕ, „Çамрăк республикă“ ушкăнĕн пĕр членĕ тата профессор Жан Перрен кĕреççĕ.

Правителствă пуçлăхĕ — Леон Бљум.

(ТАСС).

„Йермак“ тинĕсе тухнă

Борт çине 1.200 тоннă çĕркăмракĕ тата 100 тоннă таса шыв илсе, мартăн 13-мĕшĕнче ирхине 3 сехетре „Йермак“ пăрçĕмĕрен Таллинран (Естони) тинĕсе тухнă. Кăнтăр вăхăчĕ тĕлĕнче „Йермак“ Гогланд утравĕ патĕнчен иртсе кайнă.

(ТАСС).

41 çын курсран вĕренсе тухрĕç

ÇĔРПӲ. ПСК(б) Парти райкомĕ çумĕнче февралĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕрентессипе агитаторсем пулса ĕçлеме хатĕрлекен 10 кунлăх курс пулса иртрĕ. Курсран 41 çын вĕренсе тухрĕç.

Курсантсем курс вăхăтĕнче стена хаçачĕ кăларса тăчĕç. Вăл вĕренӳ ĕçĕнче пысăк пулăшу пачĕ.

С. Павлов.

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Шупашкар хули Совечĕн президиумĕ йышăннă постановлени тăрăх коммуналă предприйати „ВОДОСВЕТ“ уйрăм ĕçлекен икĕ предприйатийе уйăрăлат:

1. „ШУПАШКАР ХУЛИ ЕЛЕКТРОСТАНЦИ“ Расчот счочĕ № 17 Коммуналă банкра. Телефон № 384.
2. „ШЫВПА КАНАЛИЗАЦИ ТЫТĂМĔ“ Расчот счочĕ № 29/41 Коммуналă банкра. Телефон № 7-46.

3—3

Шупашкар хули электростанцине

АСЛĂ БУХГАЛТЕР

ТАТА

БУХГАЛТЕР КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрес: Шупашкар, Чувашскайа урам, „Водосвет поçолки“ Електростанци кантурĕ.

3—3

Гражданссем!

Ерех посудисене ерех магазинĕсене парăр! Посудăсемшĕн укçан тӳлеме ыйтăр.

Ерехсемпе, ликерсемпе сутă тăвакан пур магазинсем те ерех посудисене темĕн чухлĕ пулсан та йышăнаççĕ.

Ерех завочĕн тытăмĕ.

3—2

Академи театрĕнче

Мартăн 15-мĕшĕнче

Чăвашла спектакљ

А. Н. ОСТРОВСКИЙ

„БЕДНОСТЬ НЕ ПОРОК“

(3 пайлă комеди)

Аслă режиççор К. И. ИВАНОВ лартат.

Художник Н. Ф. БЙАКОВ.

Талон № 137.

Абонемент № 6. Талон № 9.

Чăвашсен Йалхуçалăх рабфакне *БУХГАЛТЕР тата канцељари пуçлăхĕ* кирлĕ.

2 2 ДИРЕКЦИ

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха 15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 181 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 197 Тираж 15.665 25—94 м. п. 1—1 п. л.